ХЫПАР

1925 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнчен пуçласа 1966 çулхи çу уйăхĕччен тĕрлĕ ятпа тухнă, «Хыпар» хаçат пуçарăвĕпе 1996 çулхи кăрлачăн 20-мĕшĕнчен тепĕр хут тухма пуçланă

Çамрăксен хаçачĕ

Чăваш Республикин Çамрăксен патшалăх премийĕн лауреачĕ

2014, нарăс, 28, эрне кун, 8 /5997/ №

Хакĕ ирĕклĕ

WWW.hypar.ru
molgazeta@rambler.ru

Эрнелёх Телепрограмма

16+

Хисеплё вулакансем!

Вăхăт нумай юлмарĕ: пуш уйăхĕнчен пуçласа “Хыпар” Издательство çурчĕн Интернетри сайтĕнче – hypar.ru – “Çамрăксен хаçатĕнче” пичетленекен статьясене уççăн вулама май пулмĕ.

“Çамрăксен хаçачĕн” электрон версине вулас тесен ăна çырăнмалла. Пуш уйăхĕн 1-мĕшĕччен редакцие килсе /адресĕ: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 301-мĕш пӳлĕм/ е банк урлă /пирĕн реквизитсем: АУ “Издательский дом “Хыпар” Мининформполитики Чувашии, р/с 40603810200000013969 в АКБ “Чувашкредитпромбанк” ОАО г. Чебоксары, БИК 049706725, к/с 30101810200000000725, ИНН 2130075064, КПП 213001001/, е тата Интернетри “Яндекс.деньги” тӳлев тытăмĕнче /счет номерĕ: 410012154010810 https://money.yandex.ru/ 50 тенкĕпе çырăнсан пуш-çĕртме уйăхĕсенче эрне кунсерен сирĕн электрон почтăна “Çамрăксен хаçачĕн” электрон вариантĕ пырса тăрĕ. Анчах ун пек çырăнакансен редакцие хăйсен электрон почтин адресне пĕлтерме манмалла мар!

РЕДАКЦИ.

Аделина Сотникова Шупашкарта 5 çул каялла пулнă – иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕн туйĕнче.

2 стр. ⇨

31-ри хĕрарăм килне ӳсĕр таврăнмассерен хăйĕн 8 çулти хĕрне хĕненĕ.

4 стр. ⇨

Иван Григорьев çыравçăн амăшĕ кăра пулнă: ача чухне ăна кăмака çине те ывăтнă.

5 стр. ⇨

“Пĕр пикене çĕнĕ юрă халаллатăп та пушанса юлса туххăмрах теприне саватăп”.

6 стр. ⇨

Паянхи студент пуян: ушкăнри 9 çамрăкран 5-шĕн çăмăл автомобиль пур.

8 стр. ⇨

“Тĕрлĕ чире пула физкультурăран хăтаракан справкăллисем хăйсене мăн кăмăллăн тытни килĕшмест”.

9 стр. ⇨

“Упăшка патне хăнана çӳресе йăлăхрăм”.

13 стр. ⇨

Халăх юррисен сёмне упрасшăн

Икĕ çул каяллахи «Кĕмĕл сасă» фестиваль конкурсçисен йышĕнче пулнă Алена Савельева ыттисенчен темшĕн ытларах асра юлчĕ. Ун чухне Пушкăртстан пики лауреат ятне тивĕçрĕ. Пĕтĕм тĕнчери чăвашсен çамрăк юрăçисен конкурсне вăл унччен те пĕрре мар хутшăннă, дипломантсен йышне кĕнĕ. Алена виçĕм çул куракан умне тухнă юрă йĕркисем те асрах-ха.

«...Кӳршĕ ялăн ачине те
каймалла та марччĕ иккен.
Уйрăласса пĕлнĕ пулсан
тĕл пулмалла марччĕ иккен.
Шăнкăр-шăнкăр çăл шывне те
ĕçес те килет иккен.
Чун савнине аса илсе
юрлас та килет иккен...» –

çапла шăрантарчĕ вăл «Ах, савниччĕ...» /сăввипе кĕвви Светлана Асаматăн/ юрра. Аленăна саламлама вĕрентекенĕ, Пушкăрт Республикин тава тивĕçлĕ артистки Гузель Измайлова пыни те, унпа чăваш юррине янăраттарни те çамрăк юрăçăн сумне çĕклерĕ.

3 ⇨

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви

“Хыпар” Издательство çурчĕ” автономи учрежденийĕ

Директор-тĕп редактор
А.П.ЛЕОНТЬЕВ

● Редакци канашĕ:
М.М.АРЛАНОВ – «Хыпар» Издательство çурчĕн тĕп редакторĕн çумĕ
Н.Н.КАЗАКОВ – ЧР Композиторсен союзĕн ертӳçи
А.П.ЛЕОНТЬЕВ – «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ

● Пирĕн адрес: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, “Çамрăксен хаçачĕ”
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07.
Электрон почти:
molgazeta@rambler.ru
hypar@chtts.ru
pop408@rambler.ru
Сайт:
WWW.hypar.ru

● Телефонсем:
Редактор
28-83-61
Политика, право, информаци пайĕ
28-84-05
Экономика, социаллă ыйтусен, ял пурнăçĕн пайĕ
62-30-07
Çамрăксен организацийĕсен, çарпа патриотизм, спорт пайĕ
28-83-61
Культура, кăмăл-сипет, çырусемпе массăллă ĕçсен пайĕ
62-30-07

Редактор
Д.А.МОИСЕЕВ

● Издательство директорĕ
В.А.ЧЕМЕРЕВ
Тел. 56-00-23

● Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ ФС77-54015 номерпе регистрацилене.
● Хаçат индексĕ - 54804.

● Ал çырусене рецензилемеççĕ тата каялла памаççĕ

● Дежурнăй редактор
Л.В.ПЕТРОВА

● Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.

Тираж 7960.
Заказ 717.

Пичете графикпа 18 сехет те 30 минутра алă пусмалла.
18 сехетре алă пуснă.

ПĔТĔМЛЕТӲ

“Олимп чемпионки пулатăпах”

Çапла шантарнă Аделина Сотникова Владимир Путина

Нарăс уйăхĕн 23-мĕшĕнче Сочире Олимпиада вĕçленчĕ. Раççей чысне хӳтĕлекен спортсменсемшĕн икĕ эрне ытла пăшăрхантăмăр, савăнтăмăр. Хоккеистсем çурма финала та çитейменшĕн, Евгений Плющенко сусăрланнине пула пăр çине тепĕр хутчен тухайманшăн пин-пин çын кулянчĕ пулин те спортăн пысăк уявĕ халăх асĕнче чылайлăха çырăнса юлчĕ, çĕр-шыв команди пĕрремĕш вырăн йышăнни кăмăла çĕклерĕ. СССР 1976 çулта Инсбуркра лартнă рекорда Раççей 38 çултан çĕнетрĕ. Олимпиадăра пирĕнисем 13 ылтăн, 11 кĕмĕл тата 9 бронза медаль çĕнсе илчĕç. Çĕр-шыв ылтăн медальсен йышĕпе çеç мар, выляса илнĕ мĕн пур награда хисепĕпе те пĕрремĕш вырăна тухрĕ.

Пĕрремĕш медале Олимпиадăн иккĕмĕш кунĕнче Ольга Граф çĕнсе илчĕ. Вăл конькипе 3 пин метра чупса «бронзăна» тивĕçрĕ.

Шорт-трекист Виктор Ан уйрăмах палăрчĕ. Яш пьедесталăн чи çӳлти картлашки çине виçĕ хутчен хăпарчĕ. Вăл 2011 çулччен Корея Республикин чысне хӳтĕленĕ. 2012 çулта Раççей команди йышне кĕнĕ, ятне улăштарнă. 2006 çулта Виктор Туринра виçĕ ылтăн медаль илнĕ. Çапла майпа Ан Олимп чемпинĕн ятне кăçалхипе улттăмĕш хут тивĕçрĕ.

Александр Третьяков скелетонист Раççей командин пухмачне ылтăн тепĕр медальпе пуянлатрĕ. Хальччен спортăн çак тĕсĕнче пирĕн çĕр-шыв спортсменĕсен хушшинче 1-мĕш вырăн йышăнакан пулман. Ванкуверти Олимпиадăра Александр Третьяков «бронзăна» тивĕçнĕ. Вăл – Красноярск крайĕнчен.

АПШра çуралса ӳснĕ Вик Уайлд сноубордист, Раççей команди йышĕнче тупăшнăскер, Олимпиадăра икĕ ылтăн медаль çĕнсе илчĕ. Унăн арăмĕ Алена Заварзина спортăн çак тĕсĕнчех «бронзăна» тивĕçрĕ. Вĕсем пĕр дисциплинăра тата пĕр Олимпиадăра медальсем çĕнсе илнипе хĕллехи вăйăсен историне кĕрсе юлнă иккĕмĕш çемье.

Александр Смышляев фристайлист бронза медале тивĕçрĕ. Вăл Олимпиадăра Пермь крайĕн чысне хӳтĕлерĕ. Унччен могул енĕпе Раççей спортсменĕсем 20 çул пьедестал çине хăпарайман. Николай Олюнинăн сноуборд-кросра илнĕ кĕмĕл медалĕ те çĕр-шыв спортсменĕсен ку дисциплинăра тунă пĕрремĕш çитĕнĕвĕ.

Алексей Волков, Евгений Устюгов, Дмитрий Малышко, Антон Шипулин биатлонистсем эстафетăра 1-мĕш вырăн йышăнчĕç. Арçынсен команди 1988 çултанпа Олимпиадăра «ылтăн» илмен.

Раççей Ялавне йăтса тухнă Александр Зубков бобслеист та хăйĕн çитĕнĕвĕсемпе савăнтарчĕ. Олимпиадăн юлашки кунĕччен Раççей спортсменĕсем ку ăмăртура чемпион ятне çĕнсе илеймен. Туринра Зубков «кĕмĕле» тивĕçнĕ. Владимир Козловпа унăн экипажĕ Калгарире 3-мĕш вырăна тухнă. Сочири Олимпиадăра Зубков ертсе пыракан ушкăн икĕ хутчен çĕнтерчĕ. Тăватă çынран тăракан команда пухмача 13-мĕш «ылтăнпа» пуянлатрĕ. Олимпиадăра Александр Зубков Иркутск облаçĕн чысне хӳтĕлерĕ.

Хĕллехи вăйăсен юлашки кунĕнче 50 километрлă дистанцие парăнтарса пьедесталăн виçĕ картлашки çине те Раççей спортсменĕсем хăпарни историре хальччен пулман. Александр Легков, Максим Вылегжанин тата Илья Черноусов финиша пĕрин хыççăн тепри çитсе чăннипех те тĕлĕнтерчĕç.

Татьяна Волосожарпа Максим Траньков фигуристсем мăшăрăн ярăнакансен тупăшăвĕнче 1-мĕш вырăна тухрĕç. Раççей спортсменĕсем Олимпиадăра çак чыса 78 çул тивĕçеймен.

Аделина Сотникова та çĕр-шыв историйĕнче пĕрремĕш хут «ылтăн» илчĕ. Унччен маларах спортăн çак тĕсĕнче тупăшса хĕр-хĕрарăм хушшинче пьедесталăн чи çӳлти картлашки çине никам та хăпарайман. Вун çиччĕри хĕр – Улатăрта çуралса ӳснĕ, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçнĕ Александр Кочетовăн мăнукĕн хĕрĕ. Çакă пире, Чăваш Енре пурăнакансене, уйрăмах савăнтарать. Аделина мăн кукашшĕне курман. Шел те, çывăх çынни вăл çураличченех çĕре кĕнĕ. Сергиев-Посадра пурăнакан кукамăшĕ Ангелина Кочетова мăнукĕн çитĕнĕвĕпе савăннине, çак çĕнтерӳ патне вăл чылай çул талпăннине çирĕплетнĕ. Ентешĕмĕр Чăваш Ене Аделинăпа килсе курасси пирки те пĕлтернĕ. Аделина 4 çулта чухнех коньки çине тăнă. Унăн иккĕмĕш сыпăкри мăн аккăшĕ Любовь Федотова Улатăрта пурăнать. Любовь Александровнăн мăшăрĕ Анатолий Николаевич каланă тăрăх – Çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ умĕн Аделина хăйĕн çĕнтерĕвĕпе çывăх çыннисене çеç мар, Раççейре пурăнакан мĕн пур арçынна пысăк парне тунă. Çамрăк спортсменкăпа вĕсем мухтанаççĕ, ăна ăнăçу сунаççĕ, хăнана кĕтеççĕ. Пике, мăн кукашшĕ пекех, хăюллă та маттур, нимĕнле йывăрлăхран та хăраманнине унăн кукамăшĕ Ангелина Кочетова та палăртнă. Аделинăра Совет Союзĕн Геройĕн юнĕ чупнине тепĕр пулăм та çирĕплетет. 12 çулта чухне вăл Владимир Путинпа тĕл пулсан çапла пĕлтернĕ: «Сире шантарсах калатăп: эпĕ Олимп чемпионки пулатăпах».

● 12 çулти Аделина В.Путинпа тĕл пулнă чухне.



Шупашкарта Аделинăн амăшĕн аппăшĕ Наталья Яковлева пурăнать. Вăл та пĕр тăваннăн хĕрĕн çитĕнĕвĕпе чунран савăннине пĕлтерчĕ. Вĕсем Аделина Олимпиадăра хутшăннине пĕлнĕ, анчах ылтăн медаль çĕнсе илессе шанман. Наталья каласа кăтартнă тăрăх – йăмăкĕ Ольга пулас спортсменкăна пăр керменĕсене мĕн пĕчĕкренех илсе çӳренĕ. ЦСКАри хатĕрленӳсене те çывăх çыннипе пĕрле кайнă вăл.

– Юлашки хут Аделина Шупашкарта ывăл туйĕнче 2009 çулта пулчĕ. Эпир ун патне шăмат кун аран шăнкăравласа çитрĕмĕр. Вăл çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăмпа калаçрĕ, кун йĕркинче вун-вун тĕл пулу пулнăран тăвансемпе çыхăнма та вăхăт сахаллине пĕлтерчĕ. Эпир ăна ăнланатпăр. Аделина çĕнтерĕвне пула эпир те чапа тухрăмăр. Кунĕн-çĕрĕн шăнкăравлаççĕ, саламлаççĕ, ун пирки ыйтса тĕпчеççĕ, – савăнăçлăн калаçрĕ Сотниковăн амăшĕн аппăшĕ Наталья.

Сăмах май, Олимпиадăра фристайлçăсен йышĕнче Чăваш Ен спортсменки Елена Муратова та медальсемшĕн тупăшрĕ. Шел те, финала тухаймарĕ.

Раççей Президенчĕ Владимир Путин Олимпиада чемпионĕсене патшалăх наградисем парса чыслана. IV степень «Тăван çĕр-шыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» ордена Виктор Ан, Вик Уайлд, Алексей Воевода, Татьяна Волосожар, Александр Зубков тата Максим Траньков тивĕçнĕ. Хисеп орденĕпе Евгений Плющенкăна, Максим Вылегжанина, Альберт Демченкăна, Евгений Устюгова чыслана. Аделина Сотниковăн кăкăрĕ çинче Туслăх орденне çакнă. Çитĕнӳ тунă кашни спортсменах тĕрлĕ наградăпа хавхалантарнă.

Раççей тăван çĕр-шывĕнче иртнĕ Олимпиадăра çĕнтернĕ 4-мĕш çĕр-шыв шутланать. Унччен çак чыса 1932 çулта – АПШ, 1952 çулта – Норвеги, 2010 çулта Канада спортсменĕсем тивĕçнĕ.

Пуш уйăхĕн 7-16-мĕшĕсенче Сочире Паралимп вăйăсем иртĕç. Унта 45 çĕр-шывран 1650 ытла спортсмен хутшăнĕ. Шел те, вĕсен йышĕнче Чăваш Ен чысне хӳтĕлекенсем çук. Ăмăртусене ирттерме пулăшмашкăн республикăри спортри 10 судьяна йыхравланă. Андрей Михайлов, Владислав Антонов, Юрий Плотников, Константин Мясоедов, Владимир Сидягин, Олег Булыгин, Сергей Овсянников, Валерий Васильев, Василий Никитин тата Вячеслав Ильин журналист Паралимпиада вăхăтĕнче Сочире ĕçлĕç.

Любовь ПЕТРОВА.

«Ылтăн» медаль çĕнсе илнĕ спортсменсене федераци бюджетĕнчен 4 миллион тенкĕ, «кĕмĕлшĕн» 2,5 миллион тенкĕ, «бронзăшăн» 1,7 миллион тенкĕ уйăрĕç. Çавăн пекех вĕсене автомобиль парĕç, хăш-пĕр спортсмена патшалăх пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвне татса пама та пулăшĕ. Унсăр пуçне чемпионсене регион укçан премипе хавхалантарĕ. Сăмах май, Норвегипе Швеци спортсменĕсене ку тĕлĕшпе укçа пачах уйăрмаççĕ.

Халăх юррисен сёмне упрасшăн

/Вёçё. Пуçламăшё 1-мёш стр./.

Халё вара ăна çеç мар, Алена Савельева шăрантаракан ытти юрра та итлеме май пур. Çакна нумаях пулмасть «Юрăпа пурнăç телейлё» диск алла лексен ăнлантăм. Унта 2006 çулта Пушкăрт Республикинче «Чăваш пики» ята тивёçсе гран-при çёнсе илнё Аленăн юррисене кёртнё. Çав çулхинех вăл Мускавра иртнё Пётём Раççейри чăваш хёрёсен наци конкурсёнче «Вăрттăнлăх пики» номинацире палăрнă.

Унтанпа Алена Савельевăна курманччё. Диск хуплашки çинчен пăхакан чăваш çи-пуçёллё, ытарма çук илемлё пикене çак кунсенче Шупашкарта тепёр хут курма тӳр килчё. Чăвашлăха юратаканскерпе, тăван халăхшăн çунаканскерпе ку хутёнче тёплёнрех каласма май тупăнчё.

Алена Пушкăртстанри Аваркас районёнчи Юламанра çуралса ӳснё. Вăл Савельевсен çемйине кёнё «кёмёл кайăксенчен» чи асли. Пукане пек виçё хёре ашшё-амăшё юратса, тёрёс воспитани парса çитёнтернё. Пёррехинче кил хуçипе мăшăрё аслă тёпренчёкё ӳссен кам пулассипе кăсăкланнă. Аленăн хуравё амăшне тивёçтермен.

– «Санăн юрру-ташшупа пурнăç тăваймăн», – терё ун чухне анне. Атте эпё суйланă профессие хирёçлемерё, – аса илчё юрламасăр пёр кун та ирттермен Алена.

Вăл юрăç пулассине ентешёсем тахçанах сиснё. Кукамăшённи пек илемлё сасăллăскер, килте тăтăшах юрă ёнёрленёскер хăйён пултарулăхне куракансене 5 çултах кăтартнă. Мён пёчёкрен ял клубён тата шкул сцени çинче ӳснёскер тёрлё конкурса хутшăннă. Вёсенче Çеçпёл Мишши кётнё евёр «хастарлă, хыт утăмлă» пулма, чăваш халăхё ыйтнă пек сăпайлăхпа черченлёхе упрама, ырă кăмăлпа тата ёçченлёхпе палăрма, ăс-тăна тарăнлатма вёреннё.

Пёр çитёнӳ хыççăн теприне тунă Аленăшăн ашшёпе Владимир Александровичпа амăшё Лидия Юрьевна, йăмăкёсем Маринăпа Карина, тăванёсем чунчёререн савăннă. Амăшё хёрне тек ятламан, кашни мероприятие тёплён хатёрленме пулăшнă, мён кирлине пётёмпех тупса панă, яланах ăнăçу суннă...

Алена Савельева шкул пётерсен ачаранпах хёмленнё ёмётне пурнăçлама тёллевленнё. Вăл Загир Исмагилов ячёллё Ёпхӳ искусствăсен патшалăх академийёнче вёреннё, «Театр режиссури» специальноça алла илнё. Тăван ялти культура çурчён илемлёх ертӳçинче икё çул ёçленё вăл. Искусствăна иленнё хёршён Ёпхӳри Калинин районёнчи Чăваш вырсарни шкулёнче ёçленё виçё çул та сисёнмесёр иртнё. Ачасене хушма пёлӳ панă педагог шкулти «Акăшсем» эстрада ансамбльне ертсе пыма та вăхăт тупнă.

Лара-тăра пёлмен Аленăн вăйхалё вулкан пек тапса тăнă. Унта-кунта тар тăкнă вăхăтрах конкурссене те хутшăннă вăл. Регионсен хушшинчи чăвашсен çамрăк юрăçисен Пушкăртстанра йёркеленё «Шăпчăк сасси» тупăшура хăйён пултарулăхне пёрре мар кăтартнă, Хисеп хутне те тивёçнё.

2009 çулта Алена Савельева Тутар Республикинчи Нурлатра ирттернё «Чăваш пики» конкурсра сцена çине хăпарнă. «Сар пике» номинацире палăрнă, 2-мёш вырăна тивёçнё пикене жюри членё пулнă Александр Савельев куç илмесёр сăнанă. Паллах, вăл йăрăс пӳллё, çепёç йăл кулăллă пикепе сăмах хушмасăр, çывăхрах паллашмасăр уйрăлма пултарайман. Паллашнă çеç мар, туслашнă та.

Тутарстанри Чаллă Çыр тăрăхёнчи Сашăна Юламан хёрё те килёштернё. Турă çырнине тёл пулнине ăнланнă арçын чун варлин ашшё-амăшёпе паллашма кăмăллине систернё. Çав куна вёсем хырăм тытса кулсах аса илеççё. Савельевсем патне чечек çыххи тытнă, Италире кăларнă костюм тăхăннă арçын кёрсе тăрсан кил хуçипе арăмён аллинчи кашăксем, çăварёнчи çăкăр татăкё тухса ӳкнё. Владимирпа Лидия Савельевсем каччă хёртен 17 çул аслăраххине пёлсен вёсен хутшăнăвне хирёç пулнă. Анчах юрату хăватне çёнтерейён-и? Тăватă çул каялла икё республикăн пултаруллă çыннисем пёр çемьене чăмăртаннă.

Аленăпа Саша çемье уявне кафере паллă тунă. Вёсем те, ытти çамрăк пекех, вырăсла ирттернё тесе ан ятлăр. Апла мар. Çав куна Савельевсем кăна мар, кёрекене пухăннă мён пур хăна асра хăварё. Ылтăн алăллă арçын хăй ăсталанă чăваш орнаменчёллё хăмасене кафере вырнаçтарнă. Эрешсем куç ӳкесрен сыхланине, вăй панине... ăнлантарнă. Туй кёрекине режиссер-педагога вёреннё, чăваш тёрриллё кёпе тăтăшах тăхăнакан Саша хатёрленё шурă тăхăр кăвакарчăн илемлетнё. Çёнё мăшăр хыçёнче тавралăхăн пёр кётесё курăннă. Кил хуçи ăнлантарнă тăрăх – чăвашсене тёшмёшлё халăх тени тёрёс мар. Пирён мăн асаттесемпе мăн асаннесем турра çут çанталăк урлă тӳремён пуç çапнă.

25-ри Аленăпа 40-рен иртнё Саша пёлтернё тăрăх – вёсем пёр-пёрин хушшинче чылай çул пулнине таврарисем каласан çеç аса илеççё. Мăшăр халё ывăл çитёнтерет. Савелий кёçех виçё çул тултарать, ашшё-амăшё пек чăвашлах пуплет пёчёкскер. Çемьере пёр ача çеç çителёксёррине лайăх ăнланаççё йышпа ӳснё Савельевсем, çавăнпа хёр те çуратса ӳстерме ёмётленеççё. Алена паян тесен паян тепёр хут амăшё пулма хирёç мар, анчах...

«Ёмёр пурăн, ёмёр вёрен», – тенё ваттисем. Алена Савельева ку таранччен илнё пёлӳ, аталантарнă пултарулăх шайё çителёксёррине ăнланать. Çакна вăл иртнё çулхи раштав уйăхёнче тухнă диска тепёр хут итленё хыççăн уйрăмах туйнă, хăш-пёр юрра урăхларах юрламалла пулнине асăрханă. Диск презентацине Мускаврах ирттернё. Малаллах вёренме, ӳсме талпăнакан, икё клип ӳкернё çамрăк хёрарăм пёлтёр кёркунне Гнесинăсем ячёллё Раççей музыка академине вёренме кёнё. Унта студентсенчен çирёп ыйтнине палăртрё Алена – пёр кун сăлтавсăрах сиктернёшён кăларса яма пултараççё иккен. Савелие кам пăхать тетёр-и? Амăшё инçетре чухне ăна ашшё пăхать. Вăл та ерçеймен вăхăтра юратнă кукашшёкукамăшёпе выляса савăнать. Шăпăрлан искусство çыннисен çемйинче çуралнине варта чухнех туйнă-тăр. Ун чухне Алена пилёк уйăхри хырăмпа инçе çула парăнтарса Чăваш Ене çитнё, «Телеюрра» хутшăннă. Нумаях пулмасть ăна пёр тăван Малинасем хăйсен концертне йыхравланă. Республика, хула кунёсенче те Алена Савельева тăван халăха юрăсемпе саламлать. Вера Кузьминан 90 çулхи юбилейне çёр-шывăн тёп хулинче паллă тунă çёре те çитнё вăл.

Тăван халăх юррисен хăйне евёрлёхне упраса вёсене итлекен патне çитерме ăнтăлакан Алена Савельевăн репертуарёнче 20 ытла юрă. Алена кирек ăçта кайсан та чăвашла пуплесе, чăвашла шăрантарса халăха савăнтарасшăн. Унăн умёнче искусство тёнчин алăкё уçă пулнине нумай çёр-шывра пёлекен Гузель Измайлова /шел, пёлтёр раштав уйăхёнче йывăр чире пула çёре кёнё. – **Авт./** патёнче икё çул вёренни те çирёплетет.

Елена ТРОФИМОВА.

Пуш уйăхён 31-мёшёччен

Хаклă вулакансем!

«Хыпар» Издательство çурчён кăларăмёсене пуш /март/ уйăхён 31-мёшёччен пёлтёрхи хакпа çырăнтараççё.

Васкăр! Укçăра перекетлёр.

РЕСПУБЛИКĂРА, ÇЁР-ШЫВРА, ЧИКЁ ЛЕШ ЕНЧЕ

Пушă çёрсен инвентаризацийё

Çёрпе тёллевлё, тухăçлă усă курмалла. Кун пирки ЧР Пуçлăхё Михаил Игнатьев пёрре мар каланă. Михаил Васильевич Патшалăх Канашне янă Çырура пушă тата тухăçлă мар усă куракан çёрсен реестрне икё çулта хатёрлемеллине палăртнăччё.

Пуш уйăхён 15-мёшёнчен Чăваш Енре çёрсен «халăх инвентаризацийё» пуçланать. ЧР Пурлăх министерствин ларăвёнче каланă тăрăх – акци вăхăтёнче тёллевсёр усă куракан çёрсене тупма, вёсене «ёçлеттерме» тытăнма палăртнă. Инвентаризаци ял-салари пушă çёрсем тёлёшпе иртё. Ёçлё комиссисем, ятарлă ушкăнсем йёркелёç. Вёсем хуçасăр çёр лаптăкёсене шута илёç, тёрёслемешкён вырăна тухёç. ЧР Пурлăх министерстви муниципалитетсене çак кампание хастар хутшăнма чёнет. Акци икё тапхăрпа иртё. Чӳк уйăхён 20-мёшё тёлне пётёмлетӳ тăвёç.

Медицинăри çёнёлёхсем

Шупашкарти ача-пăча республика клиникин хирургёсем операци тунă чухне пёр портлă тытăмпа усă курма пуçланă. Мёнле çёнёлёх-ха ку? Хирургсем операци вăхăтёнче пациентăн вар-хырăм хăвăлёнче пёчёк касăк çеç тăваççё. Çакна хирурги мелёпе – лапароскопипе – пурнăçлаççё.

Унччен хирургсен çакнашкал операцие пурнăçланă чухне видеооптика камерине кёртмешкён, хирурги хатёрёсемпе усă курмашкăн сахалран та виçё шăтăк тумалла пулнă. Çёнё мел вара самай лайăхрах: пациентсен операци хыççăн суран йёрё юлмасть. Халлёхе республика клиника больницинче çак мелпе икё хут усă курнă. Хирургсем каланă тăрăх – кун хыççăн пациентсем хăйсене лайăх туйнă.

Ейӳ сисчёвлентерет

Ыран – çуркунне. Паллах, хёвеллё, ăшă çанталăк кашнин кăмăлне çёклет. Анчах сывлăш температури хăпарнă май хăшёпёрин сисчёвленме тивет.

Мён пăшăрхантарать тетёр-и? Ейӳ. Кăçал вăл республикăна пёлтёрхи пекех сиен кӳме пултарать. Патшалăх чрезвычайлă лару-тăру комитечён пуçлăхё Вениамин Петров каланă тăрăх – çуркунне лăпкă пуласса шанма çук. Юлашки çулсем шыв-шур ял-салана илмесёр иртмен. Уйрăмах Улатăрсен сыхă тăмалла. Кунта кашни çуркунне Подгорье микрорайонти 40-50 çурт шыва каять. Çёрпӳ районёнче те çак лару-тăруран сыхланмалла. Çапах кăçал унта ейӳ ытлах сарăлмасса шанаççё: пёлтёр хӳтёлекен сооруженисем тума тытăннă. Вениамин Петров республикăра ейӳпе кёрешме хатёррине пёлтернё. Çак тёллевпе регион бюджетёнчен 10 миллион тенкё уйăрнă. Малтанлăха палăртнă тăрăх – Чăваш Енре ейӳ ака уйăхён пуçламăшёнче сарăлма тытăнмалла.

Программа малалла пурнăçланать

Чăваш Енре «Земство тухтăрё» программа малалла пурнăçланать. ЧР Сывлăх сыхлав министерстви кăçал унта 61 çамрăк тухтăр хутшăнасса шанать.

Алла Самойлова министр каланă тăрăх – çак тёлёшпе федераци бюджечё 30,5 миллион тенкё уйăрё. Çавăн чухлех регион бюджечё пăхса хунă. Укçа – ял-салана ёçлеме каякан çамрăк тухтăрсем валли. Пёлтёр «Земство тухтăрё» программăна 54 çамрăк хутшăннă. 2012 çултанпа 186 тухтăр ял-салара ёçе вырнаçнă.

Ирёклё кёрешӳçёсем – маттур

Чăваш Енри ирёклё кёрешӳçёсем – чăн-чăн маттурсем: харăсах темиçе турнирта палăрнă.

Екатерина Краснова Болгарири София хулинче ирёклё кёрешӳ енёпе иртнё тёнче турнирёнче бронза медале тивёçнё. «Дан Колов-Никола Петров» ăмăрту кăçалхипе 52-мёш хут иртнё. Унта 14 çёр-шыври спортсмен вăй виçнё. Пирён ентешёмёр Екатерина Краснова 53 килограмм тайман виçе категорийёнче тупăшнă. Финала кăшт çеç тухайман: Молдовăри Наталья Буду спортсменкăна выляса янă.

Çак эрнерех Кабарда-Балкар тёп хулинче арçынсен хушшинче ирёклё кёрешӳ енёпе Раççей кубокё иртнё. И.Я.Яковлев ячёллё ЧППУ студенчё Даурен Куруглиев хăйён виçе категорийёнче çёнтернё. Вăл Чăваш Ен тата Дагестан чысне хӳтёленё.

Ирина АЛЕКСЕЕВА хатёрленё.

Йёрке хуралё пёлтерет

Хёрарăм епле тўснё-ши?

Шăмăршă районёнчи Ярăслав ялёнче пурăнакан 42 çулти арçын тёлёшпе пуçарнă уголовлă ёçе тишкерсе пётернё, суда ярса панă. Ăна çын патне саккунсăр кёнёшён, çынна хёненёшён тата теприне вилмеллех хур кăтартнăшăн айăплаççё.

Следовательсен шухăшёпе – пёлтёрхи раштав уйăхён 7-мёшёнче вăл, ўсёрскер, хăйён хут уйăрттармасăр пурăннă 36 çулти арăмён ашшё-амăшён килёнче, Тури Чаткас ялёнче, пулнă. Саккунсăр мăшăрне ирёксёрлесех мунчана çавăтса кайнă, унта вара ăна пуçёнчен, кёлеткин ытти пайёнчен тимёр куркапа темиçе хут та çапнă. Юрать, усала сиссе амăшё тухнă. Вăлах çак йёркесёрлёхе чарнă. Хёрне кўршё хёрарăмё патне янă, çёр каçмах.

Тепёр кун ирхине, 5 сехетре, арçын саккунсăр арăмне шырама тухса кайнă, хайхи кўршё патне чўречe çёмёрсе кёнё те кил хуçине пуçёнчен чышкипе çапнă. Тăнне çухатнăскер урайне тёшёрёлсе аннă. Çакăнпа усă курса арçын "хăйённе" çавăтнă та тухса кайнă. Унăн чёри кăштахран тапма чарăннă. Суд-медицина тёпчевё тăрăх – мунчара хур тўснине пула.

Пёри çакăннă…

Шупашкар районён сучё 25 тата 27 çулсенчи икё çамрăк айăплине çирёплетнё, вёсене пётёмёшле режимлă колоние ăсатнă. Хайхискерсен унта 5 çул çурă лармалла.

Следстви тишкернё, суд пăхса тухнă тăрăх – пёлтёрхи çурла уйăхён 5-мёшёнче çёрле виçё каччă кафере 29 çулти хёрарăмпа паллашнă. Мотоциклпа ярăнма ўкётленё. Лешё килёшнё. Ыйту çуралать: мён тума? Çапла вара каччăсем ăна хула çывăхёнчи рашчана илсе кайнă, унта вёлерессипе хăратса черетпе мăшкăлланă. Анчах усал шухăшлăскерсем кунпа та çырлахман – çамрăк хёрарăма Шупашкар районне илсе кайнă, унта хёненё. Хур курнăскер çывăхри автостоянкăна тарса ўкме хал çитернё, унти хуралça пулни-иртни пирки каласа кăтартнă. Çав кунах çамрăк хёрарăм заявлени çырнă тăрăх уголовлă ёç пуçарнă. Çурла уйăхён 7-мёшёнче преступлени тунăскерсенчен пёрин – 28 çултин – виллине тупнă. Вăл йывăç туратёнчен çакăннă. Сăмах май, вăл халё айăпланнисенчен пёрин шăллё пулнă. Ахăртнех, çамрăк арçын тёрмене çакланассине туйса çапла хăтланнă.

Ачине нушалантарнă

Вăрнар районёнче пурăнакан 31 çулти хёрарăм тёлёшпе уголовлă ёç пуçарнă. Ăна хăйён хёрне нушалантарнăшăн явап тыттарасшăн.

Малтанлăха пёлтернё тăрăх – кăçалхи нарăс уйăхён 1-5-мёшёсенче вăл килне ўсёр таврăнмассерен хăйён 8 çулти хёрне асаплантарнă. Пёррехинче пирус тёпёпе унăн ўтне самаях пёçертнё, икё хутчен хёненё: çапнă кăна мар, тапнă та. Ёç-пуçа малалла тёпчеççё. Хёр ачана урăх ялта пурăнакан ашшё патне вăхăтлăха пурăнма янă.

Татах пушар, татах ачасем

Патăрьел районёнчи Хурама Тăварта пулнă пушарта 2 ача çунса вилни пирки иртнё кăларăмра кăна çырнăччё – усал тепёр хыпар Раççее кисретрё: Канаш районёнчи Шăхасан салинче нарăсăн 22-мёшёнче 24 çулти амăшёпе пёрле виçё ачин пурнăçё пушарта татăлнă.

Йывăç çуртран нимён те юлман. Ахăртнех, пушар электрохатёрсемпе пёлмесёр усă курнипе е вёсем юсавсăр пулнипе тухнă. Шел, çулталăкри хёр ача, 2 тата 3 çулсенчи арçын ачасем пурăнса курмасăрах çут тёнчерен уйрăлнă. Палăртмалла: çемье йёркесёр пулнă. Кил хуçалăхра пёр выльăх та усраман, картишре "фунфуриксем" çеç выртнă. Хёрарăма паян-ыран амăшён прависёр хăвармалла пулнă.

Хăйне тав тунă

Сёнтёрвăрри районён сучё Хуракассинче пурăнакан 23 çулти каччă айăплине çирёплетнё, ăна 300 сехет ёçлеттерме йышăннă.

Уголовлă ёç материалёсем тăрăх – пёлтёрхи чўк уйăхён 18-мёшёнче вăл районти полицейскисене сăмакун, техника спирчё сутакансене тупса палăртма пулăшнă. Йёрке хуралён машининче ларса пынă чухне пёрин сумкинчен 5 пин тенкё кăларса илнё. Ахăртнех, вăл çапла майпа хăйне тав тăвас тенё. Следстви пынă чухне каччă айăпа йышăннă, 5 пин тенке тавăрса панă.

Колоние – 2 çуллăха

Канаш районёнчи Ăвăспўрт Кипеч ялёнче пурăнакан 22-ри каччă айăплине суд çирёплетнё. Ăна пётёмёшле режимлă колоние 2 çуллăха ăсатма йышăннă.

Официаллă верси çапларах: пёлтёрхи авăн уйăхён 27-мёшёнче ăна халăх йышлă çўрекен вырăнта ўсёр пулнăшăн полици уйрăмне илсе çитернё. Йёрке хуралçисем протокол çырни ăна пачах килёшмен, çавна май вăл пакунлисенчен пёрне пуçёнчен çапнă. Хайхискерён пуç мими чётреннё.

Никита АНДРЕЕВ хатёрленё.

ВИЗИТ

Çамрăксемпе ёçлекен федераци агентствин ертўçин çумё Алексей Волохов Чăваш Енре пулчё. Нарăсăн 20-мёшёнче Алексей Евгеньевич çамрăксен федераци проекчёсен республикăри уйрăмёсен хастарёсемпе тёл пулчё, Чăваш Енри вёренў заведенийёсенчи студентсен хăй тытăмлăх органёсен председателёсен ларăвне хутшăнчё.

"Министр мёнле ёçленине пёлетёр-и?"

Республикăра федерацин ултă проекчё пурнăçланать: «Мён пур çурт», «Эсё – предприниматель», «Информаци юхăмё», «Команда 2018», «Ман хыççăн чуп», «Ырăлăх технологийё». Тёл пулу кăсăклă та хёрў иртрё. Алексей Волохов проектсем мёнле пурнăçланнипе интересленчё. Кашни проектăн ертўçи хăйсен ёçёхёлё пирки каласа кăтартрё, çанă тавăрса ёçленине ёнентерме тăрăшрё. Пурте чунне парса вăй хуни иккёлентермест-ха. Ара, проект çамрăкшăн кăсăклă мар тăк вăл унта пёр кун та тытăнса тăмёччё. Çапах Алексей Волохов хăйне тивёçтермен хăш-пёр самант çинче чарăнса тăчё.

«Ман хыççăн чуп» проектăн республикăри уйрăмён ертўçи Екатерина Устинова йыш çулсерен хушăннине палăртрё. Чупăва 500 ытла çын пухăнни те пулнă. Проект Чăваш Енре 2013 çултанпа пурнăçланать. Екатерина каланă тăрăх – ăнăçлă. Районсенче штабсем уçăлнă. Етёрне, Çёмёрле хулисенче ав «Хёл Мучисен чупăвё» иртнё. «Мён пур çурт» проектăн /вăл 2011 çултанпа пурнăçланать/ пирён регионти уйрăмне ертсе пыракан Максим Иванов пилёк çынна управлени компанийёсене ёçе вырнаçтарнине палăртрё. Проектсен хастарёсем çанă тавăрса ёçлеççё-ха, анчах, вёсем каланă тăрăх, çамрăксене, уйрăмах аслă шкулта вёренекенсене, явăçтарма çăмăл мар-мён. Техникумра, колледжра, училищёре ăс пухакансемпе ансатрах. Тата, паллах, студент диплом илсен ёçе вырнаçать. Ун чухне вара проект валли вăхăт та юлмасть.

– Эппин, аслă шкулсенчи студентсен канашёсемпе тачă çыхăнса ёçлемелле, – сёнчё Алексей Евгеньевич. Екатерина Устинова шăпах çак тёллеве пурнăçлама тăрăшнине палăртрё.

«Ырăлăх технологийё» проект мён тёллевпе ёçлени ятёнченех паллă ёнтё. Вёсем çынсене ырă тума тăрăшаççё. Ытларах ватăсене, ашшё-амăшёсёр юлнă ачасене пулăшаççё.

– Шупашкарти ача çуртне нумайăшё çитет. Анчах республикăра тёп хуларан самай инçе вырнаçнă ача çурчёсем те пур: Пăрачкавра, Çёмёрлере… Эпир шăпах çавăнта çитме тăрăшатпăр. Илем салонёсемпе, кондитер çимёçёсем кăларакан предприятисемпе çыхăну йёркелетпёр. Ачасем илем салонне çитсен, пылак çимёç хатёрлеме вёренсен тем пекех савăнаççё. Халё кинотеатрсемпе çыхăну йёркелесшён, – каласа кăтартрё проектăн регионти уйрăмён ертўçи Светлана Алексеева.

– Проектсем тивёçёсене пурнăçлаççё-ха. Чăваш Енри çамрăксен правительстви еплерех ёçлет? – тăруках ыйтрё Алексей Волохов.

Правительство председателё Ольга Смирнова республикăри кашни муниципалитетра Çамрăксен правительствине йёркелени пирки сăмах пуçарчё, «Раççей йёлтёр йёрё» мероприятире хастар пулнине, донорсемпе ёçленине палăртрё.

– Тăхтăр-ха, эсир юн паратăр-и? – каласа чарчё Алексей Евгеньевич.

– Çапла.

– «Раççей йёлтёр йёрё» мероприятишён Екатерина Устинова /«Ман хыççăн чуп»/ явапла, «Ырăлăх технологийёсем» юн параççё. Сăваплă çак ёçе эсир те тунине хирёç мар эпё, анчах ёç тăвакан влаçăн тёп тивёçёсем – волонтерлăх тата юн парасси мар. Вёсем – ертўçёсем. Министр мён ёçленине пёлетёр-и? Çак енпе ёçлеме хăнăхмалла, эсир вара вăхăта сая яратăр çеç. Çамрăксен правительствин порталне йёркелёр е ун валли программа хатёрлёр. Социаллă ёçсемпе аппаланакан çын Çамрăксен правительствин членё пулать-и вара? Министрпа пёр кун çўресе пăхăр-ха.

«Команда 2018» проектăн регионти уйрăмён ертўçи Ксения Петрова пёлтёр «çăлтăрпа» иртернё зарядка Хёрлё лапама 28 пин çынна пухнинчен сăмах пуçарчё. Алексей Волохов кун пирки пёлмен-тёр, çак йышран тёлёнчё. Кунта проект волонтерёсен тўпи те пур паллах. Елексей Евгеньевич çакăншăн мухтарё. Унсăр пуçне вёсем «Спорт журналистикин шкулё» проект пурнăçлама тытăннă.

Юлашкинчен «Эпир – строительсем» проект хастарёсене сăмах пачёç.

– Кунашкалли çук-çке, – малтанах ăнланмарё Алексей Волохов.

Пур-пур – Чăваш Енре. Проект волонтерёсем Хусанта иртнё Универсиадăри строительствăна хутшăннă. Халё ав Сочире хăйсен тўпине хывнă.

Алексей Волохов федераци проекчёсен регионти уйрăмён ертўçисене хастар, пуçаруллă пулма, çёнё шухăшсен пёлтерёшне кăтартса вёсене пурнăçа кёртме ăнăçу сунчё.

Ирина АЛЕКСЕЕВА.
Автор сăн ўкерчёкё.

ФЕСТИВАЛЬ

Сцена çинче – çамрăк мусăкçăсем

Нарăс уйăхён 20-мёшёнче Шупашкарти Ф.Павлов ячёллё музыка училищинче çамрăк мусăкçăсемпе юрăçсен пёрремёш уçă фестивалё иртрё. Концерт залёнче классика кёввине итлеме юратакансем чылаййăн пухăнчёç. Уява килнисене ЧР культура министрё Вадим Ефимов, училище директорё Наталья Яклашкина саламларёç. Ф.Павлова халаллана «Чăваш Ен çамрăк таланчёсем» фестиваль – Культура çулталăкёнчи пёлтерёшлё мероприятисенчен пёри.

Концертра Чăваш патшалăх академи капеллин симфони оркестрё ёçлерё. Ăна Раççей халăх артисчё, Морис Яклашкин профессор ертсе пычё. Оркестрпа пёрле Шупашкарти С.Максимов ячёллё ача-пăча музыка шкулён вёренекенё Анна Виноградова сёрме купăс, Захар Анисимов саксофон, Тимур Джафаров флейта, Ксения Игнаткина фортепиано каларёç. Кунтах хăйсен пултарулăхне училище вёренекенёсем те кăтартрёç. Иван Ткаченко фагота, Анна Яковлева кларнета, Людмила Фунтикова виолончеле, Василий Журкин сёрме купăса янăраттарчёç. «Эх, ухнем» вырăс халăх юррине Константин Федотов шăрантарчё. Фестивальре çамрăк мусăкçăсен ăсталăхёпе çеç киленме тиврё пулин те залра ларакансем «Браво!» тесе пёрре мар кăшкăрчёç, тăваллăн алă çупрёç. Уяв Вадим Ефимов министр концерта хутшăннисене Тав хучёпе чысланипе вёçленчё.

Любовь ПЕТРОВА.

ÇЫРАВÇĂ ЯЛĔНЧЕ – ХĂНАРА

Çынлăха упрама вĕрентекен сăнарсем

Пĕррехинче 1966 çулта тухнă «Ялав» журналăн 11-мĕш номерĕ алла лекрĕ. Ăна уçса вуланă май пĕр статьяра Леонид Агаковпа тепĕр çыравçă калаçăвне асăрхарăм. Çав йĕркесене илсе кăтартам-ха.

– Литература ĕçне пăрахас тетĕн-им? – тесе ыйтрăм эп /авт. – Леонид Агаков/ унран.

– Мĕншĕн пăрахас? Шутламастăп та пăрахма, – терĕ вăл.

– Тухтăр пуласшăн та-ха ху… Темле, тухтăр ĕçĕ литературăпа сыпăнсах кайман пек туйăнать…

– Чехов кам пулнă, пĕлетĕн-и? – тăрук ыйтрĕ вăл манран. – Тухтăр! Вересаев кам пулнă? Тухтăр! Анчах мĕн тери чаплă япаласем çырнă! Хамăр чăвашра та лайăх пример пур – Петр Николаевич Осипов, «Айтар», «Кушар» çыраканни ара. Шупашкарти чи лайăх тухтăр вăл. Çав вăхăтрах – чи лайăх драматург…

Çынсене эмелпе те, илемлĕ литература хайлавĕсемпе те савăнтарма ĕмĕтленнĕскер кам пулнине тавçăрайрăр-и? Эппин, унпа тата çывăхри ялсенче çуралнă çыравçăсене аса илер-ха.

Килĕрен киле çÿреççĕ

Сăмахăм Муркаш районĕнчи халĕ Ярапайкасси ял тăрăхне кĕрекен Вускассинче çуралнă Куçма Пайраш, Сыпайра кун çути курнă Иван Григорьев, Тури Тăмлай çĕрĕ çинче чупса çитеннĕ Александра Лазарева пирки.

Сыпай тĕп шкулĕнче ачасене пĕлÿ паракан Надежда Яковлева пĕлтернĕ тăрăх – çак писательсенчен пĕрне те тĕп программăна кĕртмен. Александра Лазаревăн «Улăхра» тата «Пирвайхи юрату» калавĕсене çеç 5-мĕш тата 8-мĕш классен килти вулав кĕнекисене кĕртнĕ.

– Паллах, кашни çыравçă хайлавне шкул программине кĕртеймĕн. Тата вĕсен ĕçĕсене вуласа ăнланма паянхи ачасене çăмăл мар. Сăмахран, Григорьев заводсемпе фабрикăсенче тар тăкакансен пурнăçне ытларах сăнлать, Пайрашăн пур хайлавĕнче те тенĕ пекех медицина ĕçченĕсем пирки сăмах пырать. Авторсем хăйсем пурăнса ирттернĕ тапхăр курăнать. Çавăнпа вĕренекенсен чи малтан çав вăхăт çинчен лайăх пĕлмелле, – ăнлантарчĕ чăваш чĕлхипе литературин вĕрентекенĕ.

Апла пулин те ачасем хăйсен пултаруллă ентешĕсене пĕлмеççĕ теейменĕн, мĕншĕн тесен вĕсем çыравçăсене мĕн пĕчĕкрен курса çитĕнеççĕ. Епле тетĕр-и? Шкулти коридорта пысăк та илемлĕ стенд çакнă. Унта маларах асăннă виçĕ çыравçăн сăн ÿкерчĕкĕсене вырнаçтарнă. Кун-çулĕпе ĕçхĕлĕнчи тĕп самантсене палăртса çырнисем пур. Çав стенда асăрхамасăр иртеймĕн. Унăн тăррине «Ентеш çыравçăсем» тесе çырни те, чăваш тĕррипе илемлетни те савăнтарчĕ. Сăмах май, библиотекăра та вĕсем çинчен хатĕрленĕ стенд пур. Унти текстсене, шел те, вырăсла çеç çырнă.

Сыпайра Иван Григорьев пурăннă çурт та ларать. Çакна пĕлсен çав тăрăхрисем унта асăну хăми çакма палăртнипе палăртманни пирки ыйтрăм.

– Шкулта ăс пухакансем виçĕ çав çыравçă хăш ялта тата хăш урамра пурăннине, вĕсен пÿрчĕ ăçтарах вырнаçнине аван пĕлеççĕ. Çавăнпа, манăн шухăшпа, пĕлÿ çуртĕнче пысăк стенд хатĕрлени асăну хăмине таçта вырнаçтарнинчен витĕмлĕрех. Ачасем кăна мар, килен-каян хăнасем те пирĕн тăрăхран мĕнле çыравçăсем тухнине тÿрех пĕлееççĕ, – ăнлантарчĕ Надежда Николаевна.

Ачасем çыравçăсем çинчен тĕпчев материалĕсем пухнă ĕçре хастарлăх кăтартаççĕ. Вĕрентекенсем те вĕсемпе пĕрлех килĕрен киле кĕрсе маттур ентешĕсемпе çыхăннă япаласем пуçтараççĕ, ватăсемпе тĕл пулаççĕ. Ĕçлени куç кĕрет – сăн ÿкерчĕксем те, писательсен журналсенче тахçанах пичетленнĕ хайлавĕсем, кĕнекисем тупăнаççĕ. Тĕрĕсех, йышпа ĕçлесен тăрăшни харама каймасть. Темиçешер кĕнеке кăларнăскерсем çуралнăранпа паллă кунсем çитсен мал ĕмĕтлисем мероприятисем ирттереççĕ. Вĕсене учительсемпе вĕренекенсемсĕр пуçне ял-йыш та, республикăн хисеплĕ çыннисем те, калем ăстисен тăванĕсем те хутшăнаççĕ. Сакăр çул каялла Куçма Пайраш çуралнăранпа пĕр ĕмĕр çитнине Сыпай шкулĕнче кăна мар, Шупашкарти К.В.Иванов ячĕллĕ литература музейĕнче те паллă тунă. Тепĕр çулхине те унта кайнă – ача-пăча валли чылай калав çырнă Александра Лазарева çуралнăранпа 90 çул çитнĕ ятпа асăну

каçне ирттернĕ. Çак уйăхра 90 çул каялла «Хумсем пĕрлешмеççĕ», «Çăлтăрпала çăлтăр калаçать», «Сехет çаплах шаккăнă» кĕнекесен авторĕ Иван Григорьев çут тĕнчене килнĕ. Кашни мероприяти тĕлне шкул ĕçченĕсемпе ачасем буклет кăлараççĕ.

– Ял историн управçи – шкул, çавăнпа тăван тăрăхпа, унăн пултаруллă çыннисемпе ачасене шкул саккинчен паллаштармалла. Кашни пилĕк çулта пĕрре аса илтерсе тăрсан та вĕренекенсем çитĕнсен те вĕсем çинчен манмĕç, мăнаçланма пултарĕç, – пĕтĕмлетрĕ калаçава Надежда Яковлева.

Ванькăн выляма вăхăт пулман

Пĕр тĕл пулăва Иван Григорьевăн йăмăкĕ Валентина та çитнĕ. Вăл пиччĕшне аса илсе хăш-пĕр самант пирки каласа кăтартнă. «Нихăçан та ан макăр. Йĕрекене никам та хĕрхенмест», – вĕрентнĕ асли кĕçĕннине. Çапла калама сăлтавĕ те пулнах-тăр. Хресчен çемйинче çуралса ÿснĕскер Сыпай шкулне тăватă çул çÿренĕ. Ялти кинемей Клавдия Яшкова каланă тăрăх – вăл çав вăхăтрах пĕлÿ çуртĕнче библиотекарь пулнă. Арçын ача яланах кĕнекепе туслă пулнă. Ытти шăпăрлан вара: «Ванькăн выляма вăхăт çук», – тесе шÿтленĕ. Пĕлÿ тĕнчине туртăннăскер Анат Кĕнер шкулĕнче те ăс пухнă. Шкул пĕтерсен те вăл тăван ялĕнчи вулав çуртĕнче ĕçленĕ. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи чухне Ишлейре ĕçленĕскер унтах пулас мăшăрĕпе паллашнă.

Анчах çамрăксем тĕп килте пĕрле нумай пурăнайман. Ялйышра çÿрекен сас-хура тăрăх – Ванькăн амăшĕ усал çын пулнă. Хайхискер ывăлĕпе кинне юратман, вĕсене уйăрттарнă. Арçын Шупашкара пурăнма куçнă. Амăшĕ ачине кăмака çинчен пенине пулах Иван пĕчĕкренпех уксахланă.

– Икĕ çул каялла çĕре кĕнĕ Зоя Оленова писательсене курни пирки каланăччĕ. Вăл А.Лазарева мăшăрĕпе Л.Агаковпа тата юлташĕпе К.Пайрашпа Çимĕке пĕрле килсе çÿренине пĕрре мар курнă. Çав ушкăнра И.Григорьева пĕрре те асăрхаман. Вăл çуралнă килти сивĕ хутшăнусене пула килсе çÿремен-тĕр. Анчах Иван Григорьевич чунĕпе яланах ялта пулнă. Хăш-пĕр хайлавра тăван тăрăхри çынсен сăнарне, хушаматне асăрхама пулать, – терĕ Надежда Яковлева.

Эмелпе те, сăмахпа та

Куçма Пайрашпа яла самолетпа вĕçсе килни те аякри тăванĕн Зоя Николаевнăн асĕнче юлнă. Вăл иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче пулнă. Вускасси çывăхĕнче самолет кĕрлевĕ илтĕнсенех ялти ачасем урама чупса тухнă, анчах икĕ çунатлăскер çĕр çине анман, икĕ-виçĕ çаврăм тусанах инçете вĕçсе кайнă.

«Ман ÿсĕм» аса илÿре Кузьма Ильич ашшĕ пирки çырса хăварнă: «1918 çулта ман аттене, Илья Яковлевич Садикова, хăй хут пĕлмест пулин те ялти чухăнсен комитечĕн председательне суйласа лартрĕç». Хĕрлĕ салтаксен тăхăнма атă-пушмак пулманран ялта çăпата пухма йышăннă. Илья Садиков çăпата нумай тунă, кайран вĕсене вулăса лавĕпех леçнĕ.

Асăрхарăр пулĕ: кил хуçи Садиков хушаматпа çÿренĕ, ывăлĕ Пайраш тесе алă пуснă. Мĕншĕн расна? Çакна Кузьма Ильич çапла ăнлантарнă: «Ун чухне кулаксем хăйсем çинчен пичетлесе çырнă çынсене хĕсĕрленипе пурте псевдонимпа çыратчĕç. Хам хушамат Садиков пулнăран эпĕ те «садик» сăмаха чăвашла куçарса «Пĕчĕк пахча» тесе алă пусаттăм». Анчах ку Никифор Ваçанккана килĕшмен, ăна пĕр сăмахлă псевдоним тупма хушнă. Кузьма Ильич çырнинчен – Иштерекпе Вускасси тахçан пĕр ялах пулнă, «Пайраш обществи» тенĕ. Çавăнпа «Телейсĕр кунсем», «Лайăх эмел», «Çул çинче», «Кинемей», «Калавсем», «Сăмах татĕç-ши вĕсем?», «Юрату юрри» кĕнекесен авторĕ яш чухне хăйĕн валли «Пайраш» хушма ят суйланă. Сăмах май, халĕ «Пайраш» хушма ят кăна мар, вăл хушамат. Унпа прозаик кăна мар, драматург та пулнă Кузьма Ильичăн йăхне тăсакансем çÿреççĕ. Садиковсен ăру йывăçне саракансем çинчен Евгений Ерагин тĕпчесе кĕнеке кăларнă. Ăна вуласан К.Пайрашăн кун-çулĕпе, тăванĕсемпе тĕплĕнрех паллашма пулать.

Тухтăр пулма ĕмĕтленнĕ, тĕллевне пурнăçласа çынсене эмелпе те, сăмахпа та сиплекенĕ шăпах Куçма Пайраш пулнă. Сывлăха упрама вĕрентекен калавсем /«Чăх куç», «Хирург чунĕ», «Арçынсем анчах айăплă-ши?», «Дежурствăра», «Çĕлен наркăмăшĕ» тата ытти те/ çырнисĕр пуçне пьесăсем те шăрçаланă. «Телейсĕр кунсем», «Чавса çывăх та – çыртма çук», «Кинемей» тăрăх Чăваш драма театрĕнче спектакльсем те лартнă. «Чĕри лайăх» пьесăра фронтран таврăннă Добровăн çынлăхне куратпăр. Арçынна арăмĕ кĕтсе илеймесĕр тепринпе пурăнма пуçланă. Операци тумалли çын вара шăпах унăн арăмĕн «çĕнĕ» упăшки. Доброва темĕнле йывăр пулсан та вăл çав çынна çăлса хăварать. Мăн Сĕнтĕр больницинче, Шупашкарти сиплев учрежденийĕсенче çĕр-çĕр çынна сыватнăскер фронтра та салтаксен пурнăçне çăлса хăварнă.

«Ыттисене çутăпа ăшă парса, майĕпен çунса пĕтекен çуртапа ахаль танлаштармаççĕ пулĕ çав чăн-чăн врачсене!» – тенĕ Николай Григорьев критик Куçма Пайраш пек ăста тухтăрсем пирки.

Чăнахах та савăнтарнă

Çамрăксем ял-салари шкултан вĕренсе тухсан, аслă пĕлÿ илсен тăван тăрăха таврăнманни – паянхи кунхи çивĕч ыйтусенчен пĕри. Ял сăн-сăпатне тавăрма хăш-пĕр тăрăхра çамрăк специалистсем çук. Çак ыйту темиçе теçетке çул каялла та ялсенче тухса тăнă. Çакна Александра Лазаревăн «Савăнтар çынсене» повеçĕнче те куратпăр. Велиме Хуралова пек маттурсем хулара ÿснĕ пулсан та ялсене ĕçлеме каяççĕ. Шайгильдина-Хураçкина йышшисем вара вĕреннĕ вăхăтра малашлăхра ялсене çĕклеме шантараççĕ пулин те сăмахне тытмаççĕ.

«Пĕр упа шăтăкне кайса чикрĕç те, тунсăхласа чут ухмаха ереттĕм унта. Нимĕнле культура та çук, тĕп-тĕттĕм ял, тÿсмелле мар, хуть те кравул кăшкăр... Унта культура тума çĕр çул кирлĕ! Манăн çамрăк ĕмĕре сая ярас килмерĕ. Çав шăтăкрах пурăннă пулсан, ĕмĕрне те качча та каяймастăм. Пĕр путлĕ çын та çук!» – тет раймилици пуçлăхне качча тухнă Шайгильдина. Вăл ялта культура вучахне чĕртес вырăнне официанткăра ĕçлет, апатланакансенчен укçа ытлашши ыйтма та именмест.

«Савăнăç», «Чипер Анна», «Ырă ĕмĕт», «Кĕсле янăрать», «Çурхи кăмăл», «Хĕр чĕри» тата ытти кĕнеке авторĕ çÿлерех асăннă повеçре тĕрлĕ ÿсĕмри çынна кăтартать. Вĕсен хушшинче вăрçă нушине тÿснисем те пур. «Ун пек картинăсене пиртен ытла вăрçăра пулманнисене кăтартмалла, – тет Клавдия Федоровна. – Атту хăшĕсем эпир вăрçăра пулнине ним вырăнне те хумаççĕ. Çамрăксем çеç мар, ваттисем те. Çак хальхи телейлĕ пурнăçшăн эпир çитмĕл çичĕ тамăк витĕр тухни асра та çук вĕсен».

Анат Кĕнерти колхоз çамрăкĕсен шкулĕнче пĕлÿ илнĕ, Балашов хулинчи авиаци техникумĕнче вĕреннĕ Александра Лазарева ачасем валли те шăрçаланă. Чылай хайлавра /«Туслăх», «Юратьха тĕл пулнă», «Санăн çитмĕл çичĕ тус», «Çул çинче»/ вăл кĕçĕн çултисене туслă пулмаллине, пĕр-пĕрне пулăшмаллине, яланах тĕрĕс пурăнма тăрăшмаллине ăнлантарать. Чылай кĕнеке кăларнăскер Велиме Хуралова пек чăнахах та тăван халăхне савăнтарнă. Леонид Агаковпа пултаруллă ача-пăча çитĕнтернĕскерĕн нумай кĕнекине ывăлĕ ÿкерчĕксемпе илемлетнĕ.

Пĕр тăрăхра çуралса çитĕннĕ виçĕ çыравçă хайлавĕсене, ан тив, шкул программине кĕртмен пулин те кирек хăш вăхăтра алла тытса та вулама интереслĕ. Кашни хайлавра тенĕ пекех çынлăха, чыса упрама тĕслĕх паракан сăнарсем.

Елена ТРОФИМОВА.
Автор сăн ÿкерчĕкĕсем.

ЧУНА УÇСА КАЛАÇАР

Телее кашни хăйне евĕр ăнланать. Пĕрисем ăна хăйсем валли çеç çӳлти хăватсенчен ыйтса илесшĕн, теприсем шалти вăйне тата пултарулăхне шанса ăна тĕнчене валеçесшĕн. Паянхи хăна – халăхра палăрнă, çынсенче икĕ туйăм /ырланипе хурланине/ çуратакан Типшĕм Сашук. Маншăн та çак юрăç ăнланса пĕтереймерăмăр, ăнтăнлăх, юррисене итленĕ май унăн шухăшлавĕнчен тĕлĕнме пăрахмастăп. Типшĕм Сашукăн шалти тĕнчипе çывăхрах паллашас, вулакана унăн пурнăç хаклавĕпе пайлаштарас тесе çак калаçăва пуçартăм.

“Этемĕн йытăлла пурăнма юрамасть”

– Сашук, сана курас-итлес тесе Чул хула, Самар, Чĕмпĕр облаçĕсенче, Тутар, Пушкăрт республикисенче пурăнакан чăвашсем Шупашкара ятарласа килеççĕ. Санăн пӳлĕмӳн пĕр стени çинче те хăнасем саккаспа хатĕрлеттернĕ «Тĕнчене телей валеçекен» тесе çырнă медаль çакăнса тăрать. Чылайăшĕ шӳтлет: «Сашук ырă пурнăçран юлашки çулсенче самаях мăнтăрланчĕ, «Типшĕм» хушма ята улăштарма вăхăт çитнĕ унăн». Мана та эсĕ «Типшĕм» ятпа мĕншĕн çӳрени кăсăклантарать.

– Егоров тĕнчере питĕ нумай. Елчĕк ял тăрăхĕнче çеç вун икĕ Александр Егоров. Манăн вун виççĕмĕшĕ пулас килмерĕ. Типшĕм Сашук пулса тăтăм. Шăпах çав вăхăтра «Хыпар» хаçатра ĕçлекен пĕр журналисткăна юрататтăм. Ун чухне эпĕ типсех кайнăччĕ. Тата çамрăк чухне ĕçсе çапкаланса аташса çӳренине, 25 çула çитсен пурнăçăма çĕнĕрен пуçланине кашнине ăнлантарса пĕтереймерĕ. Атте панă хушамата кăçал сцена çинче юрланă чухне каялла тавăрасшăнччĕ, анчах пĕр тусăм, сасă операторĕ Володя Манишев: «Эсĕ халь тин хăть мĕнле хушамат илсен те Типшĕм пулсах ватăлатăн», – терĕ, йăшăл та тумарăм. Куракан манăн концерта зоопаркри упăтене курнă пек: «Типшĕм Сашук, эсĕ типшĕм мар вĕт, самăр» – теессишĕнех çӳрет. Концерт хыççăн вара килне çĕкленӳллĕ кăмăлпа тухса утать, мĕншĕн тесен эпĕ залра ларакан халăхпа чиркӳри пекех чуна уçса калаçатăп.

– Чăвашра хăех сăвă çырса ăна кĕвĕлекен сахал. Санăн çак пултарулăхун йывăççин тымарĕсем сĕткенне ăçтан пухаççĕ?

– Пурнăçăмра çул кăтартакан виçĕ «палăк» пур: Надежда Сельверстрова сăвăç, Борис Чиндыков драматург тата Николай Казаков композитор. Унччен вĕсем маншăн турăшсемччĕ, халĕ аслă юлташсем. Вĕсем мĕн туни пĕтĕмпех маншăн шедевр. Халь тин хĕрсен ăш çунтармăшĕ пулаймăп, çулсем малаллах хăвалаççĕ, мĕншĕн тесен манран уçă саслăрах, хитре хусканусем тăвакан юрăç та пайтах, анчах манăн, ыттисемпе танлаштарсан, çĕнĕ сăмах, ыранхи куна шанăçпа кĕтме тивĕçлĕ юррăмсем пур. Валентин Абрамов калани асрах: «Сашук, санăн юррусем чĕрĕ, пурнăçран». Эпĕ чун суйланă çулпа утма тăрăшатăп. Аслисемшĕн те, çамрăксемшĕн те социаллă артист пулас килет.

– Миçе сăвă-юрă авторĕ эсĕ?

– 17-ре çырма пуçларăм. 23 çулта сăввăм-юррăм пинрен те иртрĕ пуль. Паян эпĕ ял пурнăçĕ çинчен ытларах çыратăп. Унта пурăнакансене хавхалантарас килет. Ара, эпĕ те ял ачи-çке, прописка та тăван ялтах, аттеанне çурчĕ мана яланах кĕтет. Шăп та лăп тепĕр 13 çултан, ывăлăм шкул пĕтерсен, тăван тăрăха яланлăхах куçса кайăп. Хулара троллейбус мăйракинчен çӳлерех пăхаймастпăр, ялта вара ирĕклĕх, сывлăш уçă та таса, уя тухатăн та пĕтĕм тĕнче куç умĕнче сарăлса выртать.

– Сана куракан мĕншĕн юратнине ăнланса пĕтерейместĕп. Залра яланах лăк тулли çын.

– Эпĕ юррăмсенче суймастăп. Куракана пĕр концерта та ирĕксĕрлесе чĕнместĕп, паллакансем урлă билетсем сармастăп. Профком председателĕсемпе, хуçалăх ертӳçисемпе йăпăлтатса çӳреместĕп. Ман пата куракан «Юлташ пурăнать», «Шанăçпи», «Анне» юрăсене итлеме хăй ирĕкĕпе килет.

– Чылайăшĕ «Типшĕм такмакĕсене» те килĕштерет. Эсĕ ыттисенчен пач уйрăлса тăратăн тесен те йăнăш пулмĕ. Санăн пуçна хăйне евĕр шухăшсемпе сăнарсем мĕнлерех майпа вĕçсе кĕреççĕ?

– «Анне» юрра 10 çул çыртăм. Тĕрĕссипе, сăвва хут çине çырма 10 минут çителĕклĕ, анчах малтан юрă сăмахĕсен чунра пиçсе çитмелле. «Типшĕм такмакĕсене» çырнă чухне кашни çаврăмне шăрçаланă хыççăн Коля Пыркин купăсçă патне шăнкăравларăм, пĕрле ахăлтатсаултăмăр.

– «Эп тĕнче хĕррине çуран çитĕттĕм, сар кайăк пулса çӳл тӳпене вĕçĕттĕм пĕр самантлăха курассишĕн аннене, пуçа хурассишĕн ун хул пуççийĕ çине». Юрруна итленĕçем пирĕнтен уйрăлнă аннене аса илетĕп те куçран куççуль пăчăртанса тухать...

– Анне Елчĕк районĕнче паллă çын пулнă. Вăл шкулта вырăс чĕлхипе литературине 35 çул ытла вĕрентнĕ. Атте те районта хисеплĕ çынсен шутĕнчеччĕ. Вылăх тухтăрĕнче тăрăшнă. Талăкĕпех ĕçлетчĕ, çур çĕр варринче ентешсен вылăхĕсене çăлма пĕрре мар тухса кайнă.

– Эсĕ артист çулне суйланă. Аçу-аннӳрен тĕслĕх илес темерĕн-им?

– Манăн дипломра «филолог, чăваш чĕлхипе литературин учителĕ, театр режиссерĕ» тесе çырнă. Паянхи куна çывхартса пурнăçăн тĕрлĕ çулĕпе утрăм: çамрăксен театрĕнче вăй хутăм, вăрман касрăм, çурçĕрте кирпĕч çапрăм, Мускавра сантехника турăм, прораб ĕçне алла илтĕм, апла пулсан та тĕнчен хăть хăш кĕтесĕнче те салху чăваш сăвăçи пулма пăрахмарăм. Кашни кун ĕç хыççăн çĕнĕ юрăсем хайлаттăм. Шалу илмессерен Шупашкара килсе çĕнĕ юрă çыртараттăм. Манăн юрăсене эстрадăри чăвашсен паллă вун-вун артисчĕ шăрантарать. Тĕнче касса çӳресе ывăнтăм, халĕ эпĕ – чăваш эстрада артисчĕ.

– Чап тени, пĕр енчен, аван пулăм, пысăк укçа ĕçлесе илме май парать, тепĕр енчен, çын чунне иленсе пуçа çиет. Чапран хăрамастăн-и?

– Эпир турă аллинче. Ку ыйтăва маншăн Стас Михайлов хуравланă: «Ман пата чап 20 çулта килнĕ пулсан эпĕ тахçанах ĕçсе вилĕттĕм, анчах ят 40-ре килчĕ. Халĕ эпĕ укçа, чап хакне туятăп». Хамран çапла хушатăп: «Эпĕ 11-мĕш класранпа сăвă-юрă çыратăп. Паллă юрăç пулас тесе миçе каç çĕр çывăрмасăр çунсаĕмĕтленсе-тунсăхласа ирттерменши? Куракан юратăвĕ ман пата 35 çулта çитрĕ, эпĕ çакна тивĕçлипе йышăнма пултартăм».

– «Мунча» юррунта кукку патне менелнике вĕçтеретĕн, Петĕр Эйзин сăввипе кĕвĕленĕ «Сарă хĕрсем» юрăра утă çулатăн, «Эпир пулнă, пур, пулатпăр» ятлинче Тăван çĕр-шыв пуласлăхĕшĕн пăшăрханатăн, «Ан ĕçĕр-ха, çамрăксем» юррунта пулас ăру сывлăхĕшĕн кулянатăн. Кашни сăвву паянхи саманапа тачă çыхăннă.

– Манăн пултарулăх тĕрлĕ пайран тăрать. Хăш-пĕр юрра пуян юлташсем ыйтнипе çырнă, теприсене – чун хушнипе, виççĕмĕшĕсене – хитре хĕрсене савнипе.

– Паян иксĕмĕр «юрату» сăмаха миçе хут аса илтĕмĕр. Санăн тĕнче пысăкăш чĕрӳнтен юрату çăл куç пекех тапса тăнăн туйăнать. Арăму хаçат вуланă хыççăн пĕçеркĕ парасран хăрамастăн-и?

– Манăн арăм – тухтăр. Вăл пĕр пике çумне те кĕвĕçмест, ăнланать. Хĕрсем мана юратаççĕ пулсан эпĕ питĕ лайăх артист. Хӳхĕм пикесене сăвă-юрă тĕнчинче çеç юрататăп эпĕ. Кашнине çĕнĕ юрă халаллатăп та пушанса юлса туххăмрах теприне кăмăллатăп. Петĕр Яккусен сăмахĕсем ялан асра: «Çырăннă чухне çырăр, çунса кĕлленсен сăвăсем çуралмаççĕ». Эпĕ паянхи куннчен те юрататăп, çунатăп, асапланатăп, тунсăхлатăп, çавăнпа телейлĕ. «Эсĕ кӳнĕ чун асапĕ пулчĕ сăвă, уншăн тав», – тет эпĕ юратакан сăвăç Надежда Сельверстрова.

– Чăвашсен нумай хут авланнă гени сăвăçисемпе ăсчахĕсем арăмĕсене икшер-виçшер ача çураттараççĕ. Пĕррехинче мана Геннадий Волков ăсчах кулянса: «Эх, чăваш хĕрне арăм тăваймарăм, хам хыççăн чăн чăваш ачи хăвараймарăм», – тенĕччĕ. Эсĕ вара миçе хĕрарăма ача çураттартăн?

– Тӳрех каласа хăварам: хам пирки гени поэт теемместĕп. Манăн пултарулăха халăх хаклатăр, эпĕ миçе тенкĕ тăнине куракан калатăр. Манăн çемье пурнăçĕ пĕрре те илемлĕ мар. 19 çулта авланса 20-ре уйрăлтăм. Тавах турра, шăп та лăп хам сăнлă хĕр ӳсет, ăна халалласа юрă та çырăнчĕ. Эпир туслă, часчасах курнăçатпăр, Надя ЧПУн экономика факультетĕнче ăс пухать. Унпа пĕрле Григорий Вакку ывăлĕ те вĕренет. Эпĕ вара Гришăпа пĕр курсра пĕлӳ илнĕ, пĕр пӳлĕмре пурăннă. Мăшăртан уйрăлнă хыççăн пурнăç çулĕпе 15 çул пĕччен утрăм. Ева Лисина новеллинчи пек каласан «йытăлла». Этемĕн вара йытăлла пурăнма юрамасть. Эпир çак тĕнчере хăнара анчах, этемсем кăна. Йăнăшатпăр, ӳкетпĕр, аманатпăр, вĕçетпĕр, пĕр сăмахпа, пурăнаспăн. Хальхи ăспа пулсан çамрăк ĕмĕре тĕрĕсрех ирттерĕттĕм. Çапла, çĕр çинче 39 çул пурăнса пухнă кун-çул опытне нимĕнле укçапа та илеймĕн.

– Ывăлна Андрейкăна май пур таран рекламăлатăн. Тĕнчере тем тĕрлĕ шухăшлă, тем тĕрлĕ энергетикăллă çын та пур. Залра ларакан усал куçлисем куçăхтарасран хăрамастăн-и? Елена Иовлева ав сцена çине мĕн пур пӳрни çине икшер ылтăн çĕрĕ тăхăнса тухать, хăйне пăсасран шикленет.

– Мана чылайăшĕ ывăлупа мухтанатăн тесе ӳпкелет. Пĕлĕр: эпĕ ăна питĕ юрататăп. Андрейка 7 уйăх тултарсан арăма ĕçе чĕнсе илчĕç. Ачана кампа хăварас? Ир пуçласа мĕн каçчен хампа илсе çӳреме тиврĕ. Артист пурнăçĕ ялан çул çинче. Куç ӳкесрен пач та шикленместĕп, мĕншĕн тесен манăн концертсенче ăнсăртран лекнĕ, усал сунакан çын çук.

– Эпир – пурнăç çулĕ çине тăракан ачасемшĕн чи пирвайхи тĕслĕх. Андрей санăн çулна суйлас пулсан...

– Нихăçан та. Артист пурнăçĕ – йытă пурнăçĕ. Пирĕн канмалли кун çук. Пасарти сутуçăсем пек кун кунлатпăр, вĕри апат çинĕ-çимен. Хăçан – ăнăçлă, тупăшлă, хăçан вара ĕçлесе илнĕ укçа бензин хакне саплаштарма та çитмест. Андрейка кăрлачăн 12-мĕшĕнче кун çути курнă, çак кун прокурорсен уявĕ. Çирĕплетсех калатăп: вăл пиччĕ пекех юрист пулĕ.

– Эсĕ – филолог, чăваш чĕлхипе куçа курăнман туйăмпа, несĕлсем парса хăварнă сăмах вăйĕпе çуталса çĕр пичĕ тăрăх утакан чăваш. Тăван чĕлхе пуласлăхĕ санăн чунна пăшăрхантарни куç кĕрет, юррусенче те кун çинчен уçăмлăн калатăн...

– Пĕр юлташ калашле: «Чăваш чĕлхи – уй-хирпе вăрман чĕлхи». Хамран хушса хуратăп: «Çăтмахри пирĕшти чĕлхи». Цивилизаци аталаннă май хальхи технологипе çыхăннă акăлчан, вырăс, француз сăмахĕсене чăвашла куçарма питĕ хĕн. Калăпăр, айпад, скайп сăмахсене чăвашла тӳрремĕн куçарсан кулăшла илтĕнме пултараççĕ. Çапах эпĕ хăш-пĕр эгоист ашшĕ-амăшне ăнланмастăп. Ачисене ирĕксĕрлесе чăвашла вĕрентеççĕ. Чăн чăваш Гранд Терра джипра ларсан та чăваш пулма пăрахмасть, чăвашлах шухăшлать, юрлать. Чăвашлăх чунра, юнра пулмалла. Ывăла чăвашла калаçма ятарласа вĕрентмесен те вăл тăван чĕлхене пĕлет. Елчĕк тăрăхĕнче çуралнă чăваш сăвăçин ачи чăваш пулсах ӳсет.

– Эсĕ пĕр вăхăтра чăваш хаçачĕсемпе питĕ туслăччĕ, санăн хăйне евĕр хайлавусене вуласа тĕлĕнеттĕм. Хаçат-журналтан мĕнле сăлтава пула писрĕн?

– Ун чухне пурнăç çине Федор Достоевскин Мышкин кнеçĕ пек ачапчалла пăхаттăм. Кĕнекесем кăларса, драмăсем, киносценарисем çырса укçа ĕçлесе илес килетчĕ. Халĕ Интернетри социаллă сайтсенчи сăн ӳкерчĕксен айĕнче «класс» пусни, ентешсен хаклавĕсем интереслĕрех – акă манăн пĕлтерĕш, витĕмлĕх.

– Чăн-чăн поэт тени пин-пин çын хушшинче пĕрре пулать. Сумлă çак ята тивĕçекен чăваш пур-и?

– Пур. Валерий Раштав. Вăл чăвашсен Александр Блокĕ.

– Артистсем теприне мухтанине юратмаççĕ, пĕр-пĕрин çинчен тĕрлĕ юмах-сăмах сараççĕ, кĕвĕçеççĕ... Эсĕ çакна еплерех йышăнатăн?

– Манăн пĕр ĕмĕт пур: радио хыпарлавра е телекуравра чăваш артисчĕсене мухтаса, хавахалантарса питĕ вирлĕ кăларăм йĕркелес килет. Вячеслав Христофоров концертĕнче юрланă чухне хумханнипе чĕтреме пуçлатăп. «Тимтире мĕншĕн япăх якатрăм-ши, çӳçе ма кастармарăм-ши?» – тесе кулянатăп. Унăнни пек харизм тата энергетика урăх никамăн та çук.

– Сан çинчен халăхра шӳтсем те çӳреççĕ...

– Çӳреччĕр. Ырăпа е усалпа калаçни эпĕ мĕне те пулсан тăнине пĕлтерет. Чи хăрушши – чĕмсĕрлĕх, асăрхаманни, хакламанни. «Типшĕм Сашук, сана чăтма пултараймастăп», – текенсем те пур. Эпĕ вара телейлĕ! Çак çĕр çинче маншăн тăшман çук.

– Чăнлăхран хăрамастăн пулсан та кухньăра турă кĕтесĕ пур...

– Турă маншăн – шанăç, юрату, ыранхи куна кĕтме вăй паракан хăват тата асам. Турра ĕненмен çын – чунсăр. Людовик патша: «Пирĕн хыççăн хăть шыв илтĕр», – тенĕ. Апла калани питĕ пысăк путсĕрлĕх. Тăхăмсен те пурăнмалла. Ирхине вăранни, нимĕн те ыратманни, сĕтел çинче çăкăр пулни, сăвă-юрă çырăнни, ачасем сывă çитĕнни, арăм юратни – çаксем турă пуррине ĕнентереççĕ. Этем ĕмĕрĕ иртсен çӳлти патшалăхра канăç тупасса, атте-аннепе, кукамайпа тĕл пуласса ĕненетĕп. Ĕненӳ – чи сăваплă туйăм. Таса пулăр, юратăр, ĕненĕр.

– Хăвна хăв мĕнлерех ыйту параттăн?

– Куракансем час-часах: «Сана «ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ» ята хăçан параççĕ?» – тесе шăхвăртаççĕ. Хуравлатăп: «Нихăçан та». Эпĕ нимĕнле организацип министерствăсем тăрăх та йăпăлтатса, пуç çапса çӳреместĕп. Чи пахи – юрăсене итлекен пурри. Халăх валли çырнă юрăсем çынсен асĕнче юласса чĕререн ĕненетĕп. Кашни уйăхрах итлекен патне пĕрер çĕнĕ юрă çитеретĕп.

– Паянхи çамрăк ăрава пурăнма пĕрре те çăмăл мар. Пирĕн, аслисен, вĕсен таса чунĕсене упрас тесен мĕн тумалла-ха?

– Чи малтан вĕсене сывлăха упрама вĕрентмелле, тĕрлĕ ейленӳпе киленсе пĕтернĕ сывлăха каярахпа нимĕнле укçапа та туянаймастăн. Çамрăксем, ĕненĕр: эрех ĕçсе çапкаланса çӳрени паян модăра мар. Паян – ĕçченнисен, вăйлисен, харсăррисен вăхăчĕ. Сăпайлăхпа тараватлăх, юратупа çынлăх, чыслăхпа тӳрĕлĕх, туслăхпа пĕлӳлĕх нихăçан та модăран тухмĕç. Çакна тепĕр хут ĕненес тесен Типшĕмĕн концертне пырса курăр.

Альбина ЮРАТУ калаçнă.

Студентсен ĕçĕсем

Аслă тата вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ учрежденийĕсенче ăс пухакан çамрăксен кăларăмĕ

ТĔПЧЕВ

Аслă шкула – çăмăл машинăпа

● Ольга Иванова.

● Андрей Яковлев.

Çул çинче чупакан «тимĕр утсен» йышĕ çулран-çул ӳсет. Мĕн пытармалли, хăш-пĕр семьере вĕсен шучĕ иккĕрен те ытла. Паян руль умне арçын çеç мар, хĕрарăм та ларать. Çамрăксем те çул çитменнине пăхмасăрах çăмăл машинăпа çӳреме тытăнаççĕ. Акă, тĕслĕхрен, республикăра регистрациленнĕ автомобильсен 36,5 проценчĕ тĕп хулара чупать. Пĕрисем ĕçе васкаççĕ, теприсем ачисене садике ăсатаççĕ, виççĕмĕшĕсем «тимĕр урхамахпа»... вĕренме çӳреççĕ. Аслă шкулсен, общежитисен умĕнче çăмăл машина чылай. Раççейре кăларнисеннен пуçласа ют çĕр-шыврисем таранах. Хаклă йышши автомобильпе преподавательсем çеç мар, студентсем те çӳреççĕ. Анчах «тимĕр урхамахлисене» мĕнле йышăнаççĕ-ши? Вĕсем унпа вĕренме кашни кун çӳреççĕ-и? Бензин валли укçа мĕнле тăваççĕ?..

Стипенди бензин илме çитет

Раççей патшалăх социаллă университечĕн Шупашкарти филиалĕнче 3-мĕш курса вĕренекен Андрей Яковлев руль умĕнче виççĕмĕш çул. Аслă шкула вăл «Форд Фокуспа» çӳрет. Йĕкĕте Америка машинине ашшĕ туянса панă. Апла пулин те лайăх çанталăкра Андрей çуран утма та ӳркенмест. Унпа пĕр ушкăнра вĕренекеннисенчен тепĕр ачан çеç çăмăл машина пур. Çавăнпа унран преподавательсем те, студентсем те тĕлĕнеççĕ иккен. Çула май пулсан вăл пĕлĕшĕсемпе тусĕсене лартса кайма хирĕçлемест. Андрей «Форд Фокуспа» таксистра ĕçлемест. Хăш чухне ялтан таврăннă май çынсене лартса килкелет. Каччă çăмăл машинăна тасалăхра тытать.

Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн 2-мĕш курс студенчĕ Павел Архипов вĕренме çăмăл машинăпа пĕр уйăх çеç çӳрет-ха, анчах «тимĕр урхамах» туянас шухăшĕ унăн малтанах пулнă. Каччă çуллахи каникул вăхăтĕнче ĕçлеме çӳренĕ. 2013 çулхи «Приорăна» илме ăна ашшĕ-амăшĕ нумай пулăшнă. Павел каласа кăтартнă тăрăх – ушкăнри 9 ачаран 5-шĕн çăмăл машина пур. Унăн шухăшĕпе, студент «тимĕр утпа» çӳреничен тĕлĕнме кирлĕ мар. Халĕ чылай çамрăкăн автомобиль пур, хăшĕ-пĕри ашшĕ-амăшĕ тăрăшнине тивĕçлипе хакламанни çеç кăмăлсăрлантарать ăна. Эрех ĕçсе руль умне ларни е тата аврие çакланни, шел те, час-часах çамрăксен айăпĕпе пулать-çке-ха. Елчĕк районĕн каччи çакна ăнланать, çавăнпа çул çинче тимлĕ пулма тăрăшать. Техникăна бензинпа тивĕçтерме ăна стипенди пулăшать. Вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыраканскер уйăхсерен 6 пин ытла тенкĕ илет. Çĕрлесерен ĕçлемест вăл, тус-таванĕ е ултаннĕ ыйтсан çула тухма хирĕçлемест.

Павелпа хĕрсем машинăллă каччăсене килĕштерни çинчен те сăмах пуçартăмăр. Паянхи хĕр-упраç «тимĕр утлисене» кăмăлланине вăл та пытармарĕ. Чылай пике çăмăл машинăллă, хваттерлĕ йĕкĕте куç хывать.

Павел занятисене çӳремесĕр ĕçлекен яшсене ятламасть. Каччă шухăшĕпе – ĕçлесе илнĕ уксана пĕлсе расхутламалла, аттепе анне сăмахне кирек хăçан та вырăна хумалла, вĕсем тăрăшнине хаклама пĕлмелле.

Вăрă-хурах – общежити умĕнче

И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн машиностроени факультетĕнче 2-мĕш курса вĕренекен Алексей Федоров çăмăл машина туянассишĕн çулла икĕ уйăх пĕр канми ĕçленĕ. Пĕр уйăх ытла – Мускавра, тепĕр виçĕ эрне тĕп хуламăрта вăй хунă. Хăй тăрăшнипе тата ашшĕ-амăшĕ пулăшнипе ВАЗ-2112 маркаллă çăмăл машина туяннă. Йĕпреç районĕн каччи унпа кашни кунах çӳременнине пĕлтерчĕ. Общежитирен инçе мар вырнаçнă вĕренӳ корпусне вăл çуранах утать. Физкультура занятийĕсене каймалла чухне çеç «тимĕр урхамахне» хускатать. Бензин валли укçа тăвассишĕн яш таксистра ĕçлет. Ку тĕллевпе руль умне, паллах, вĕренӳрен пушă вăхăтра е эрне вĕçĕнче ларать. Хăйĕн çăмăл машинине вăл общежити умĕнче лартать. Вăрă-хурах тапăннă тĕслĕх пулнă-ши? Кукăр алăллисем студентсен çăмăл машинисене те ухтараççĕ-ши? Алексей каласа кăтартнă тăрăх – кун пекки сайра пулать. Унăн «урхамахне» халĕчен тĕкĕнсе курман. Эрне каялла пĕлĕшĕн çăмăл машинин чӳречине çĕмĕрсе хурах унти хатĕрсене йăкăртнине илтнĕ вăл. Эппин, студентсен асăрхануллă пулмалла – усал шухăшлисем вĕсене тĕкĕнмеççĕ тесе шанмалла мар.

Автомобильпе çӳрекенсене хĕрсем ытларах килĕштернине Алексей те сăнанă, анчах вăл хăйĕн урхамахĕпе çак тĕлĕшпе усă курмасть. Пикесене çăмăл машинăпа илĕртмест, вĕсене кăмăлне кура суйлать.

Преподавательсене те сĕнӳ-канаш кирлĕ

Яш-кĕрĕм çеç мар, хĕр-упраç та юлашки вăхăтра çуран çӳремест. И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн историпе географи факультетĕн студентки Ольга Иванова виçĕ çул каялла права илнĕ. Ашшĕпе амăшĕ ăна «Калина» туянса панă. Пике каласа кăтартнă тăрăх – вăл пĕчĕк чухнех руль умне ларма ĕмĕтленнĕ, 18 тултаричченех çӳреме вĕреннĕ. Халĕ Ольга çул çинче хăйне ирĕклĕ тытать.

Хĕр ушкăнĕнче 30 çамрăк вĕренет. Вĕсенчен 5-шĕ университета çăмăл машинăпа çӳрет. Ольга çаксенчен пĕри, ыттисем пурте каччăсем. Пикерен тĕлĕнекен те, ăна мухтакан та пур. Çул çинче пăтăрмахсăр пулмасть. Пĕррехинче вăл хирĕç килекен КАМАЗран пăрăнма ĕлкĕрнĕ. Оля ултаншĕсене вĕренме пĕрле лартса çӳрет. Права илме тĕв тунă хĕрарăм преподавательсем унран сĕнӳ-канаш та ыйтаççĕ, экзамен пирки тĕпчеççĕ.

Бензин валли укçа Оля хăех ĕçлесе илме тăрăшать. Студентка стипенди илет, пушă вăхăтра та кĕрĕк арки йăваламасть. Сăмах май, сигнализаци, радара тата çăмăл машинăри ытти хатĕре вăл хăех туяннă. Пике çул çинчи çăмăлттай шухăшлă водительсене кăмăлламасть. «Тимĕр ут» илессишĕн вĕренме çӳремесĕр шапашра хĕлĕн-çăвĕн ĕçлекенсене хурлать. Унăн шухăшĕпе – машина тимĕр купи çеç, чи пахи – вăхăтра пĕлӳ илсе лайăх специалист пуласси, руль тармасть, ун умне туссен умĕнче мăнаçланассишĕн çеç ларма кирлĕ мар.

Чăннипех те, Ольăн сăмахĕсемпе килĕшмесĕр тăраймăн. Студентăн тĕп тивĕçĕ – вĕренесси. «Тимĕр ут» вара куçса çӳремелли хатĕр çеç. Çитменнине, вăл шывпа чупмасть. Юрать, 1-2-мĕш курссенче вĕренекенсене стипенди çумне хушса тӳлеме тытăнчĕç, ăна лайăх вĕренекен, пĕчĕк тупăшлă е нумай ачаллă çемьесенче çитĕннисене кăна параççĕ. Ыттисен вара ашшĕ-амăшĕннен пулăшу кĕтме е урăх майпа тупăш тума тивет.

ХУСКАТНĂ ЫЙТУ ТАВРА

Аслă шкул умĕнче пĕлтерӳ çакăнса тăрать:

«Хисеплĕ студентсем! Хăвăр «тимĕр урхамахăрсене» ятарласа уйăрнă вырăна лартăр, преподавательсен велосипечĕсем сирĕн хаклă йышши автомобилĕрсене чĕртеме пултараççĕ».

* * *

Икĕ студент тĕл пулнă, пĕри тепринчен ыйтать:

– Эсĕ çăмăл машинуна 25 градус сивĕре хускатаятăн-и?

– Кам пĕлет? Вăл манăн ун пек сивĕре уçăлмасть те.

МАТТУР!

Нумаях пулмасть ЧР Наци библиотекинче республика шайĕнчи «Професси тĕнчи» фестиваль çĕнтерӳçисене чысларĕç. Мала тухнисем «Арт-Профи Форум» программăна хутшăнĕç. Ăна «Раççейри çамрăксен канашĕ» общество организацийĕ пуçарнă. Унăн тĕп тĕллевĕ студентсен хушшинче ĕç тата инженери специальноçĕсен сумне ӳстерессипе çыхăннă. Фестивале хăйсен пулас профессине юратакан, республикăри тĕрлĕ техникумпа колледжра вĕренекен 62 çамрăк хутшăннă. Çĕнтерӳçĕсене виçĕ номинацире чыслана. «Арт-Профи-професси» номинацире Шупашкарти хула хуçалăхĕпе строительство техникумĕн студентки Елена Полиевтова мала тухнă. Вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ учрежденийĕнче ăс пухакан пикепе тĕл пулма май килчĕ.

Кӳршĕ пӳлĕмре гитара каланă чухне

Вĕренме мар, çывăрса тăранма та май çук

Елена Чăваш Енрех çуралса ӳснĕ. 7 çул каялла вĕсен çемйи Норильска куçса кайнă. Пикене чунĕ Чăвашаллах турттă. 9-мĕш класс пĕтерсен вăл Шупашкарти техникума вĕренме кĕрес тĕллевпе çула тухнă. Хăна çуртĕнче ĕçлеме тĕв тунăскер кунта хăйне килĕшекен специальноç тупнă. Пикене профессии суйлама кам пулăшни тата вăл мĕншĕн аслă шкула мар, техникума вĕренме кĕни кăсăклантарчĕ.

– Пĕрле вĕренекенсенчен чылайăшĕ халĕ те ăçта каяссине пĕлмест. Мана 5-мĕш класра вĕреннĕ чухнех çак ыйту канăçсăрлантаратчĕ. Шухăшăмпа хама сутуçă вырăнĕнче те, юрист пуканĕ çинче те, ӳнерçĕ ларçинче те куртăм. Чуна çывăх професси аннен виççĕмĕш сыпăкри йăмăкĕ хăнана килсен çирĕпленчĕ. Вăл Италире пурăнать. Неаполь хулинчи пĕр отельре менеджерта ĕçлени пирки каласа кăтартрĕ. Унăн ĕçĕ çав тери килĕшрĕ, сĕнĕвĕсемпе канашĕсене тĕплĕн итлесен хамăн пурнăçа та çав енпе çыхăнтарма тĕв турăм. Унтанпа тăватă çул иртрĕ. Шупашкарти хула хуçалăхĕпе строительство техникумĕнче иккĕмĕш çул вĕренетĕн. Хамăн специальноç кунран-кун ытларах та ытларах килĕшет. Хăна çурчĕсен тытăмĕнче ĕçлес тесен ахаль тирпейлӳçĕрен пуçласа ертӳçĕ тилхепин тивĕçĕсем таранах лайăх пĕлмелле. Вĕреннĕ вăхăтра официантра ĕçлесе пăхас шухăш та пур. Ĕç опычĕ ахаль пухăнманнине чухлатăп, çавăнпа аслă пĕлӳ иличчен техникума вĕренме кĕтĕм, – сăмах çăмхине сӳтрĕ Елена.

Шкул ачипе студент пурнăçĕ пĕр маррине пике туйса илнĕ ĕнтĕ. Вĕренме кĕрсенех Елена общежитире пурăннă. Унти кулленхи шăв-шава чăтайманнипе тепĕр çулах иккĕмĕш сыпăкри аппăшĕсемпе пĕрле хваттер тара илнĕ. Студентка шăплăхра ĕçлеме юратнине пĕлтерчĕ, кӳршĕ пӳлĕмре çĕрĕпех гитара каланă чухне кĕнеке шĕкĕлчеме мар, çывăрса тăранма та май çук.

Елена техникумра вĕренме кăмăллать, студентсене культура мероприятийĕсене сахалрах явăçтарни çеç пăшăрхантарать ăна. Унăн та, ытти хĕрупраçпа яш-кĕрĕм пекех, «Студентсен çуркуннине» хутшăнас, КВН командисен ваййине пăхас килет. Пике каласа кăтартнă тăрăх – техникумра фестиваль-конкурс сахал йĕркеленеççĕ. Унăн шухăшĕпе – студента пултаруллăхне аталантарма та май туса памалла, уявсене йышпа ирттермелле.

Елена лайăх вĕренет. Уйăхсерен 500 тенкĕ стипенди илет. Ку укçа студента нимĕн тума та çитменни каламасăрах паллă, анчах мĕн тăвăн? Çамрăксен ирĕксĕрех ĕç тупма е тупăш тума урăхла мел шырама тивет. Атте-анне ĕнси çинче ялан лараймăн. Елена та пушă вăхăта усăллă ирттерме тăрăшать. Хулари чĕрне искусствин шкулĕнче ăсталăхне туптать. Унта вăл маникюр, педикюр тума вĕренет. Пĕр çын чĕрнисене илем кĕртессишĕн студенткăн вăтамран 3-4 сехет ларма тивет. Апла пулин те кулянмасть вăл, вĕренсе çитсен, мĕн пур вăрттăнлăхпа паллашсан çакă енчĕке хулăнлатмалли меслет пуласса шанать.

Пике спорта та юратать, анчах сывлăк енчен хавшак пулнипе тухтăрсем ăна физкультура занятийсене çӳреме хушмаççĕ.

Еленăн ĕмĕчĕсем пысăк. Вăл техникум дипломĕпе çеç çырлахасшăн мар, аслă пĕлӳ те илесшĕн. Харпăр усламçă ĕçне пуçласа пысăках мар хăна çурчĕ уçасшăн. Паллах, тĕллевсемпе ĕмĕтсене пурнăçа кĕртес тесен нумай тăрăшмаллине ăнланать вăл, çак ĕçре ăна çемйи, пулас мăшăрĕ пулăшса та хавхалантарса пырасса шанать. Хальлĕхе пике çанă тавăрса вĕренме, хăйĕнчен мĕн килнине тума хатĕр.

ИНТЕРЕСЛĔ!

Университетри тĕлĕнтермĕш йăла

● АПШри Йель университетĕнче тĕлĕнтермĕш йăла пур. Аслă курса куçнă студентсем хăйсен мĕн пур конспектне 1-мĕш курса вĕренме кĕнисене параççĕ. Çакăншăн аслисем çамрăкраххисен куçĕ тавра "зеленка" сĕреççĕ. Лешсем вара кун каçипех "çутатса" çӳреççĕ.

● Раççейре XIX ĕмĕрти студентсем эрех-сăра самаях ĕçнĕ курăнать. Вĕсен çурăмĕ çине кил адресне çырнă. Çак пулăма Антон Чехов та асăнса хăварнă: "Стрельна" тата "Яр" ресторан ĕçченĕсем эрех ĕçкеленĕ студентсен çурăмĕ çине вĕсен адресне пурăпа çырнă. Лавçăсем вара вил ӳсĕрскерсене киле леçнĕ".

● АПШри Принстон университетĕнчи экзамен вăхăтĕнче аудиторире преподавательсем лармаççĕ. Мĕншĕн тетĕр-и? Студентсем вĕренме кĕрсенех "Чыс кодексне" вĕренсе тупа тăваççĕ. Унта каланине килĕшӳллĕн – çамрăксен нихăш экзамен вăхăтĕнче те çырса илме юрамасть.

● Раççейре çамрăксем шкул пĕтерсенех институт-университета вĕренме кĕмешкĕн талпăнаççĕ. Çакна спецификистсем каччăсем çара каясран хăтăлса юласшăн пулнипе çăлтавлаççĕ. Европăри çĕр-шывсенче вара аслă шкула ăс пухма кĕрекенсен вăтам ӳсĕмĕ – 25 çул çурă.

◆ ЫЙТСА ПĔЛТĔМĔР

"Хĕсмете юрăхсăр пулнăшăн савăнаççĕ"

«Чăваш Енре пурăнакан кашни виççĕмĕш çын спортпа туслă», – тенĕчĕ республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче. Çакна пĕлтĕр Шупашкар хулин кунĕнче иртнĕ «Çăлтăрпа пĕрле – зарядкăна» 28 пин çын ытла тухни те çирĕплетрĕ. Чăваш Ен 2015 çулта çăмăл атлетика енĕпе Европа чемпионатне, 2016 тата 2018 çулсенче хăвăрт утас енĕпе Тĕнче кубокне ирттерме ирĕк илни те республикăри спортсменсен çитĕнĕвĕсене тивĕçлипе хакланине палăртать. Çамрăксем те юлашки вăхăтра сивлек йăласенчен пăрăнса сывă пурнăç йĕркине пăхăнма тытăнни сисĕнет. Хĕр-упраçпа яш-кĕрĕм каласăвĕнче: «Чĕлĕм туртасси халĕ модăра мар», – тенине часчасах илтме тӳр килет.

Паянхи студент спортпа туслă-и? Ӳт-пĕве хусканусем туса пиçĕхтересси уншăн пĕлтерĕшлĕ-и? Физкультура занятийĕсене студент юратса е зачет илессишĕн çеç çӳрет-и? Çак ыйтусен хуравне тупас тĕллевпе республикăри тĕрлĕ вĕренӳ заведенийĕнче ĕçлекен преподавательсемпе çыхăнтăм.

Преподавательсен куçĕне

Майя ПОЛЯКОВА, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧПУ физкультура преподавателĕ:

– Эпĕ физикăпа математика, экономика факультечĕсенче ăс пухакан студентсене вĕрентетĕп. Манăн занятисене хĕрупраçпа яш-кĕрĕм юратса çӳрет. Паллах, вĕсен хушшинче кутăнлашакан, чирпе сăлтавланса занятисене сиктерекен те çук мар. Çур çулта пĕрре студентсен бассейнра тӳлевсĕр ишме ирĕк пур. Шывран хăраманнисемпе унта та çӳретпĕр. Занятисене кăсăклă ирттерме тăрăшатăп. Студентсем волейболла, баскетболла выляма кăмăлласçĕ, çăмăл атлетика енĕпе ăсталăхне туптаççĕ. «Спорта ирĕксĕрлесе юраттараймăн. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнакан, хусканни ӳт-пӳшĕн усăллине ăнланакан яш-хĕр физкультура занятийĕсене çӳретех.

Тамара ЩЕРБАКОВА, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн физвоспитани кафедрин ертӳçи:

– Студентсен 80 проценчĕ физкультура занятийĕсене юратса çӳрет. Çамрăксем ытларах вăйăпа çыхăннă спорт тĕсĕсене килĕштереççĕ. Яшсем – футболла, хĕрсем баскетболла выляма юратаççĕ. Чылайăшне бадминтон илĕртет. Лекципе практика занятийĕсене тĕрлĕ енлĕ ирттерме тăрăшатпăр. Эрнере пĕрре йĕлтĕрпе ярăнма тухатпăр, тренажер залне çӳретпĕр. Физкультурăра çамрăксене çăлтăрне спортăн тĕрлĕ тĕсĕнче тĕрĕслеме май туса паратпăр. Юлашки икĕ çулта академие хавшакрах студентсем вĕренме килнине асăрхатăп. Пирĕн аслă шкулта ытларах ял ачисем ăс пухаççĕ пулин те, пĕр пытармасăр каласан, хăшĕ-пĕри анлă саралăнă вăйăсенех выляма пĕлмест. Çавăнпа паянхи студентсемпе ытларах ĕçлеме тивет. Вĕсенчен те çирĕп ыйтатпăр. Семестрта 1 е 2 заняти сиктернисене каçарма пулать-ха, унтан ытла килменнисене пуçран шăлмастпăр. Кунашкаллисен пушă вăхăтра урăх ушкăнпа занятисене çӳреме тивет.

Авенир ЕРМОЛАЕВ, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн физкультурăпа спорт кафедрин ертӳçи:

– Физкультура занятийĕсене юратса çӳрекенсем те, çав вăхăтрах ăна кăмăлламаннисем те пур. Тем тесен те, 10-20 çул каяллахи студента паянхипе танлаштарма çук. Уннчен физкультура занятийĕсене пурте чăтăмсăрăн кĕтнĕ. Хĕлле те урамра футболла вылянă. Халĕ çамрăксем уçă сывлăшра ытлашши пуласшăн мар. Урама тухса чупиччен пĕчĕк лапамра мечĕк хăваласçĕ. Тĕрлĕ чире пула физкультурăран хăтаракан справкăллисем хăйсене мăн кăмăллă тытни килĕшмест. Эпир вĕреннĕ чухне хавшакрах сывлăхлисем кун пирки преподавателе каланă та ыттисемпе танах чупнă, вылянă. Паянхи яш-кĕрĕм хăй вăй-халсăрринчен вăтанмасть. Каччăсем хĕсмете юрăхсăр пулнăшăн кулянас вырăнне савăнаççĕ. Халĕ самани те улшăнчĕ. Паллах, кунта Интернет витĕмĕ те пур. Мĕн патне килсе тухăпăр капла? Этемлĕхĕн пĕр пайĕ ӳт-пӳ çирĕп, вăйхал тапса тăтăр тесен спортпа туслă пулмаллине пурăна киле пур пĕрех ăнланса илĕ. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнман çамрăксен шăпи кулянтарать. Эпир вĕсене спорта юратма, унăн тĕрлĕ тĕсĕпе çывăхлатма мĕн вăй çитнĕ таран тăрăшатпăр.

Кăларăма Любовь ПЕТРОВА хатĕрленĕ.

ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА пуш, 3–9

3 тунти кун

1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
Церемония вручения наград американской киноакадемии «Оскар-2014» Прямой эфир из Лос-Анджелеса 16+
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.20, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «Черные кошки» 16+
23.20 «Познер» 16+
0.30 Церемония вручения наград американской киноакадемии «Оскар-2014» Передача из Лос-Анджелеса 16+
2.20, 3.05 Х/ф «ЧЕМПИОН» 12+

РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 3.15 «Провал Канариса» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ-12» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ЛЮБОВЬ В БОЛЬШОМ ГОРОДЕ-3» 12+
22.55 «Дежурный по стране» Михаил Жванецкий
23.50 Т/с «БЕЛАЯ ГВАРДИЯ» 16+
1.50 Т/ф «ПРОФЕССИЯ - СЛЕДОВАТЕЛЬ»
4.15 Комната смеха

ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

Россия К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.40 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10 Д/ф «Палех»
12.25 Д/ф «Кофе. Путешествие с Востока на Запад»
13.15 «Линия жизни»
14.10 Т/с «В ЛЕСАХ И НА ГОРАХ»
15.10 Д/с «Влюбиться в Арктику»
15.40 Х/ф «АЛЕШКИНА ЛЮБОВЬ»
17.05 Д/ф «Пьер Симон Лаплас»
17.10 Гала-концерт в честь Марты Аргерих
18.10 «Полиглот»
19.15 Главная роль
19.30 «Сати. Нескучная классика...»
20.10 «Правила жизни»
20.40 «Больше, чем любовь»
21.20 «Тем временем»
22.05 Д/ф «Нет смерти для меня»
23.00 Д/с «Бабий век»
23.50 Х/ф «ГОРЯЧИЕ ДЕНЕЧКИ»
1.25 К. Сен-Санс. «Муза и поэт»
2.40 Г. Свиридов. Кантата «Ночные облака»

НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ-2» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «ДИКИЙ» 16+
1.35 «Казнокрады» 16+
2.30 Дикий мир 0+
3.00 Т/с «ДЕЛО КРАПИВИНЫХ» 16+
5.00 Т/с «ПРЕСТУПЛЕНИЕ БУДЕТ РАСКРЫТО» 16+

ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.25 Х/ф «МОЯ МОРЯЧКА» 12+
9.55, 21.45 Петровка, 38 16+
10.15, 11.50 Х/ф «ЛАРЕЦ МАРИИ МЕДИЧИ» 12+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
12.25 «Постскриптум» 16+
13.30 «В центре событий» 16+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 Городское собрание 12+
15.55 Х/ф «ДАЧНАЯ ПОЕЗДКА СЕРЖАНТА ЦЫБУЛИ» 12+
17.50 «Операция «Жесть» (10 16+
18.25 «Право голоса» 16+
19.50 Т/с «СЕВЕРНЫЙ ВЕТЕР» 16+
22.20 Т/с «ГЕНЕРАЛЬСКАЯ ВНУЧКА» 12+
23.15 Без обмана. «Рынок закрыт» 16+
0.05 События. 25-й час
0.40 «Футбольный центр»
1.10 «Мозговой штурм. Первозвери» 12+
1.45 Х/ф «ИНСПЕКТОР ЛИНЛИ» 12+
3.35 Х/ф «ИРОНИЯ ЛЮБВИ» 16+
5.15 Д/ф «Тайны сердца» 12+

РЕН

5.00, 9.00 Т/с «БОЕЦ» 16+
6.00 «СЛЕДАКИ» 16+
6.30, 13.00 Званый ужин 16+
7.30, 1.45 «Смотреть всем!» 16+
8.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
14.00, 15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «Верное средство» 16+
20.00 «Военная тайна» 16+
23.30, 2.10 Т/с «СПАРТАК: БОГИ АРЕНЫ» 18+
4.20 Т/с «АГЕНТСТВО» 16+

Чăваш Наци телекуравĕ

18.30 «Республика» информаци кăларăмĕ
18.45 «Илемпи урокĕсем» /0+/
19.00 «Каçхи тĕл пулу» /12+/
19.30 «Республика» информационная программа
19.45 «По существу» /12+/
20.00 «Дерево дружбы» /12+/
20.30 «Акилбупсер» /0+/
20.45 «Сердце на двоих» /12+/
23.00 «Республика» информаци кăларăмĕ
23.15 «Республика» информационная программа
23.30 «По существу» /12+/
23.45 «Дерево дружбы» /12+/

Чăваш Наци радиовĕ

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 17.30-18.00 Радио-библиотека. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+)10.30-11.00 Шурăм пуç. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-17.00 Марафон: дни национального радио в городах и районах республики (к 5-летию Национального радио Чувашии) (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (12+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
Çĕнĕ юрă 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8-8.10, 9.05-9.10,10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10,15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10
Тунти кун – Эрне кун
6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00 22.00 – Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 – Новости. (12+)

Чăваш радиовĕ

6.10 Анонс передач
6.15 События
6.27 Салтак пăтти
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă çаврăмĕ
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Çĕнĕ кĕнеке
7.33 Паянхи кун
7.37 Çула тухсан
7.51 Мы - вместе
7.58-8.00 Погода
* * *
12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал
* * *
18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.24 Чĕрĕ шыв
18.39 Каçхи юмах
18.49-19.00 Вести-Чувашия

4 ытлари кун

1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.25 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «Черные кошки» 16+
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Городские пижоны» «Карточный домик» 18+
2.00, 3.05 Х/ф «ГРОМОВОЕ СЕРДЦЕ» 16+

РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Камчатка. Жизнь на вулкане»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ-12» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ЛЮБОВЬ В БОЛЬШОМ ГОРОДЕ-3» 12+
22.55 Специальный корреспондент 16+
23.55 Т/с «БЕЛАЯ ГВАРДИЯ» 16+
2.15 «Честный детектив» 16+
2.45 Т/ф «ПРОФЕССИЯ - СЛЕДОВАТЕЛЬ»
4.10 Комната смеха

ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Утренний гость /на чувашском языке/
9.25-9.55 Мир искусства. Академик Василий Димитриев /на чувашском языке/
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

Россия К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10 «Мировые сокровища культуры»
12.25, 20.10 «Правила жизни»
12.50 «Пятое измерение»
13.20 Д/ф «Физик от Бога»
14.10 Т/с «В ЛЕСАХ И НА ГОРАХ»
15.10 Д/с «Влюбиться в Арктику»
15.40 «Сати. Нескучная классика...»
16.20 Д/ф «Александр Мень»
17.00 Примадонны мировой оперы. Мария Гулегина
18.10 «Полиглот»
19.15 Главная роль
19.30 Власть факта. «Лучшие друзья бриллиантов»
20.40 «Больше, чем любовь»
21.20 «Игра в бисер»
22.05 «Линия жизни»
23.00 Д/с «Бабий век»
23.50 Х/ф «НЕВЕСТА БЫЛА В ЧЕРНОМ»
1.35 Концерт Академического оркестра русских народных инструментов ВГТРК. Дирижер Н. Некрасов

НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ-2» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Т/с «ДИКИЙ» 16+
1.30 Квартирный вопрос 0+
2.35 Главная дорога 16+
3.05 Т/с «ДЕЛО КРАПИВИНЫХ» 16+
5.05 Т/с «ПРЕСТУПЛЕНИЕ БУДЕТ РАСКРЫТО» 16+

ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.35 Х/ф «НА СЕМИ ВЕТРАХ» 12+
10.35 Д/ф «Татьяна Окуневская. Качели судьбы» 12+
11.30, 14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 Х/ф «ЛЕРА» 16+
13.40 Без обмана. «Рынок закрыт» 16+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 «Наша Москва» 12+
15.30 Х/ф «ДВЕНАДЦАТЬ СТУЛЬЕВ» 12+
16.50 «Доктор И...» 16+
17.50 «Истории спасения» 16+
18.25 «Право голоса» 16+
19.50 Т/с «СЕВЕРНЫЙ ВЕТЕР» 16+
21.45, 1.30 Петровка, 38 16+
22.20 Т/с «ГЕНЕРАЛЬСКАЯ ВНУЧКА» 12+
23.20 Д/ф «Контрацептивы. Убойный бизнес» 16+
0.10 События. 25-й час
0.45 «Автогонки. Звезды за рулем» 12+
1.50 Х/ф «МИСС МАРПЛ АГАТЫ КРИСТИ» 12+
3.45 Т/с «ИСЦЕЛЕНИЕ ЛЮБОВЬЮ» 12+
5.05 Д/ф «Энциклопедия. Пауки» 12+

РЕН

5.00, 4.30 Т/с «АГЕНТСТВО» 16+
6.00 «СЛЕДАКИ» 16+
6.30, 13.00 Званый ужин 16+
7.30, 1.45 «Смотреть всем!» 16+
8.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
9.00 Т/с «БОЕЦ» 16+
14.00, 15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
18.00 «Верное средство» 16+
20.00 «Территория заблуждений» 16+
22.00 «Пища богов» 16+
23.30, 2.15 Т/с «СПАРТАК: БОГИ АРЕНЫ» 18+

Чăваш Наци телекуравĕ

06.00 «Республика» информаци кăларăмĕ
06.15 «Чăваш халăх юмахĕсем» /0+/
06.30 «Республика» информационная программа
06.45 «По существу» /12+/
18.30 «Республика» информаци кăларăмĕ
18.45 «Тĕплĕ калаçу» /12+/
19.00 «Çĕр тивлечĕ» /12+/
19.30 «Республика» информационная программа
20.00 «Комфортный город» /12+/
20.30 «Пошептушки» /0+/
23.00 «Республика» информаци кăларăмĕ
23.15 «Тĕплĕ калаçу» /12+/
23.30 «Республика» информационная программа
00.00 «Комфортный город» /12+/

Чăваш Наци радиовĕ

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Голос Республики. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30 10.10-10.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Ялтан яла. (12+) 9.30-10.00 Социальный вопрос. (12+) 10.30-11.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-14-15.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.10-16.30 Эстрадный концерт. 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.10-20.00 Чунлă эфир. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+)
Çĕнĕ юрă 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

Чăваш радиовĕ

6.10 Вести-Чувашия
6.24 Анонс передач
6.26 Кăмăлтан. Ирхи концерт
6.40 Столичный курьер
6.54 Пĕр сăвă
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Вести-Чувашия
7.23 Паянхи кун
7.27 Будьте здоровы
7.37 Тÿсĕм
7.47 Олимпийские горизонты
7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ
* * *
12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал
* * *
18.10 Çĕнĕ хыпарсем
18.24 Остров молодых
18.39 Каçхи юмах
18.49-19.00 Вести-Чувашия

5 юн кун

1 КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.05 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «МАНЕКЕНЩИЦА» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Городские пижоны» «Карточный домик» 18+
2.00, 3.05 Х/ф «ДИТЯ ЧЕЛОВЕЧЕСКОЕ» 16+

РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Душа. Путешествие в посмертие» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 19.55 Вести
11.30, 14.30, 17.35 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
16.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ-12» 12+
17.50 Футбол. Товарищеский матч. Россия - Армения. Прямая трансляция из Краснодара
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ЛЮБОВЬ В БОЛЬШОМ ГОРОДЕ-3» 12+
22.55 «Код Кирилла. Рождение цивилизации»
23.55 Т/с «БЕЛАЯ ГВАРДИЯ» 16+
2.05 Т/ф «ПРОФЕССИЯ - СЛЕДОВАТЕЛЬ»

ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.35-17.50 Вести-Чăваш ен

Россия К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10, 17.55, 21.50 «Мировые сокровища культуры»
12.25, 20.10 «Правила жизни»
Мăшăрĕн шăллĕне савать

Капмар культура çурчĕ. Кинофильм пăхатпăр. Пирĕн ума хĕрпе кацчă пырса ларчĕç. Пĕр-пĕрне чылайранпа пĕлеççĕ пулмалла. Борис Ларисăн аллине çепĕççĕн тытрĕ. Хăлхаран пĕрмай темĕн пăшăлтатрĕ. Савнă çыннин çепĕç сăмахĕсене итлесе ирĕлекен хĕр кинофильма тимлесе пăхмарĕ. Кацчă ыталани, чуп туни Ларисăна ăсран яланах тайăлтаратчĕ, пурин çинчен те мантаратчĕ. Хальхинче те çаплах пулчĕ. Калаçса ларни куракансене кансĕрлени çинчен шухăшламарĕç – пĕр вĕçĕмсĕр пăшăл пăтти пĕçерчĕç. Ытларах Борис пакăлтатрĕ.

– Ытла та хитре эсĕ, Лариса! Пĕр сана кăна юрататăп! – çапла калаçса кацчă хĕр тутине шырарĕ.

Лариса аван марланса пуçне айккинелле пăрчĕ. Кинофильм вĕçленсен çамрăксем çăмăл машинăна ларса куçран çухалчĕç.

Чун варлисем çулталăк ытла туслă çыхăну тытнă хыççăн пĕрлешсе чаплă туй кĕрлеттерчĕç. Тепĕр çултан çемьере йыш хушăнчĕ. Ашшĕ валли юлташ – ывăл – çуралчĕ. Çемье тĕрекленсе вăй илчĕ. Мăшăр виçĕ пÿлĕмлĕ хваттер туянчĕ, унта пурăнма куçрĕ. Тĕп килте ашшĕ-амăшĕ çеç юлчĕ. Юлашки вăхăтра кил хуçи чирлеме пуçларĕ. Вĕсен кĕçĕн ывăлĕ Илюш Раççей çарĕнче контракт мелĕпе тăратчĕ. Вăхăчĕ вĕçленсе пыратчĕ ĕнтĕ – килти лару-тăрăва пула Илюш çемйипех яла куçрĕ. Вĕсем киличчен упăшкин шăллĕ пуррине Лариса пĕлнĕха, анчах ăна пĕрре те курман. Пĕррехинче тăвансем ашшĕ килне пуçтарăнчĕç. Лариса хăнара Илюша пĕрремĕш хут тĕл пулнă хыççăнах: «Эпĕ пĕтрĕм», – тесе шухăшларĕ. Урисем чĕтрерĕç, чĕри чикрĕ. Хăйне аран алла илчĕ.

Унтанпа çулталăк иртрĕ пулин те Лариса Илюша самантлăха та манаймарĕ. Çав вăхăтрах хăй çемьелли çинчен аса илчĕ. Икĕ çемье арканма пултарасси канăçсăрлантарчĕ ăна. Тата хуняма куçне мĕнле курăнăн ку мыскара хыççăн? Ир тăрсан та, каç пулсан та Илюш асран çаплах тухмарĕ. Вырăн çинче Борисписа юнашар выртнă вăхăтра та Илюшпа аташрĕ. Пиччĕшĕпе шăллĕ кăмăлĕпе пачах расна. «Эпĕ унăн арăмĕнчен чылай хитререх курăнатăп. Куç хĕссенех Илюш çакна сисĕ, – шухăшларĕ Лариса. – Анчах ку утăма тума шикленетĕп. Ăна манмашкăн сăлтавсем шыратăп. Анчах вăл мана хăй патнелле ытларах та ытларах туртать. Эпĕ упăшкаран пур пĕр уйрăлас çук, шăллĕне те манаймастăп...» Çапла вăл юрату. Хĕрÿ те кăварлă.

Виталий ПУЯНКАС.
Тăвай районĕ.

ТĔЛĔНМЕЛЛЕ!

Мăнтăр арăм хĕрÿрех

Ялта пурăнатăп. Шкултан вĕренсе тухсан ыттисем пек хулана талпăнмарăм. Пĕр класра ăс пухнисенчен нихăшĕ те ялта юлмарĕ, пурте таçталла тапса сикрĕç: пĕрисем – Шупашкара, теприсем – Мускава. Чăннипе, аякка тухса каяссишĕн нихăçан та çунман эпĕ. Асатте хăй вилес умĕн манăн аттене кил вучахне сÿнтерме хушман. Эпĕ те аслисен шухăшĕпе килĕшетĕп. Эпĕ – çемьери кĕçĕн ывăл. Ача чухне чăкăт çиме юратнăран тантăшсем мана Чăкăт Ваççи тесе евитлетчĕç. Йăлапа килĕшÿллĕн манăн тĕп килте пурăнмалла. Мăрьерен тĕтĕм тухма чарăнсан кил-çурт юхăнать.

Юлташсем аттестат илсен хăйсемпе пĕрле чĕнчĕç – итлемерĕм. Чи çывăх юлташ темĕнле ÿкĕтлесен те хамăннех петĕм. Колхоза тракториста вырнаçрăм. Вăхăт иртнĕçемĕн тантăшăмсем пĕрин хыççăн тепри туя чĕнчĕç. Çынсен уявĕнче ура хуçса ташласах хусаха тăрса юлтăм. Пурте авланса, кацча кайса пĕтрĕç. Çук, эпĕ хĕрсене çавăрттарма пĕлместĕп тесе шухăшлама тăхтăр-ха. Чĕлхе яка, хам – ясар. Турă çырнине часах тупаймарăм. Юлташсем хĕрсемпе сахал мар паллаштарчĕç, анчах вĕсенчен пĕри те кăмăла каймарĕ. Хăва пек çинçе пилĕклĕ, çил вĕрсен кĕç-вĕç вĕçсе каясла кĕлеткеллĕ пикесем мана кирлĕ мар. Хам çума вăйлăрах пăчăртасан шăмми-шакки шăтăр-шатăр хуçăлас пек пÿ-силлĕ хĕрсем илĕртмеççĕ. Арăм текеннин ыталамалăх-чĕпĕтмелĕх пултăр. Вырăсем каланă пек: лайăх çыннăн нумай пулмалла. Хам тĕреклĕ мар, шăмми-шакки çеç. Темĕн чухлĕ çисен те мăнтăрланаймастăп.

Тĕлĕнетĕп. Илемлĕ кĕлеткеллĕ хĕрсемех начарланма тăрăшаççĕ. Пĕçĕ мăнтăр, иккĕмĕш янах мăкăрăлса тăрать, пилĕк хăва пек мар... Тьху, ним çукран аптăраççĕ пулмалла. Хĕрарăмăн кăмăлĕ хитре пулсан арçын унăн кĕлеткине асăрхамасть те. Пĕрре çапла Шупашкара кайма тиврĕ. «Турă çырни хапха умне килет», – теççĕ вĕт. Манăн çавăн евĕрлех пулса тухрĕ, анчах кăштах урăхларах. Турă çырнине начарланма пулăшакан клиника умĕнче тĕл пултăм. Пăхатăп: тулли кĕлеткеллĕ хĕр çав çуртран кĕçвĕç макăрса ярасла тухрĕ. Алăка шалт хупрĕ те карта çумне тайăнчĕ. Мĕскĕне шеллесе ун патне пытăм:

– Мĕншĕн хурланатăн, чиперкке?

Манăн сасса илтсен лешĕ сасăпах йĕрсе ячĕ. Аптăранипе ним калаймасăр хытса тăтăм.

– Кулатăн тата... Мĕнле чиперкке ĕнтĕ эпĕ? Слон, ĕне... Мĕн пĕчĕкренех çак сăмахсем ман çумран хăпмаççĕ. Темĕнле тăрăшсан та начарланаймастăп, сахалрах çиме хăнăхаймастăп.

– Вара мĕн кулянмалли пурха кунта? Аптăрамалла. Тупнă пăшăрханмалли... Сана тулли кĕлетке илем кÿрет.

Хайхискер эпĕ шÿтлетĕп тесе шухăшларĕ пулмалла – ахаль те тарăхнăскер сумкине ман еннелле вăркăнтарчĕ. Юрать, пăрăнса юлтăм.

– Хăв шăна пырши пек те çынсенчен кулса çÿретĕн, – хайхискер ÿлесех ячĕ. – Елена Малышевăн «Здоровье» программине каймалли çеç юлать ĕнтĕ. Унта 150 килограмлисем те модельсем пулса тăраççĕ. Ăмсанатăп.

– Санăн Малышева патне мар, Малашин фермине каймалла, – хальхинче чăнах та шÿтлесе калаçрăм.

– Кам тата вăл?

– Шăп та лăп çакă, – шĕвĕр пÿрнепе хам çине тĕллерĕм.

Ăçтан персе ятăм тулккăш? Тĕреклĕскер мана пырса чышрĕ кăна – çĕре тĕшĕрĕлсе антăм. Те ура шуçнăран, те хама çирĕп тытайманран... Унтан хĕр сумкине йăтрĕ те малалла таплаттарчĕ. Çапах хăпмарăм – хыççăн утрăм. Кăштах туллашнă хыççăн хайхискер манпа чиперех калаçма тытăнчĕ.

Вера халĕ Малашин «ферминче» кĕлеткине пиçĕхтерет. Ăна çав çулах кацча илтĕм. Мăшăрăмпа выльăх-чĕрлĕх чылай усратпăр. Вера кунĕн-çĕрĕн картишре ăшталанать: начарланма вăхăт çук. «Ялта ахалех начарланăн», – тейĕ хăшĕ-пĕри. Çук, арăм хуларан мĕнле килнĕ – çав калăпăшлах. Мĕншĕн тетĕр-и? Верăн аппетитне ăмсанма çеç пулать. Манран та нумайрах çиет. Хăть çĕрле, хăть ирхине – уншăн пур пĕрех. Сивĕтмĕше кунĕн-çĕрĕн уçса пăхать. Алăк татăлса ан антăрччĕ çеç. Пĕррехинче çĕрле вăранса кайрăм. Пăхатăп: Вера çумра çук. Тула тухнă-ши? Кĕтетĕп. Çаплах çук. Кухньăра чăштартатни илтĕнчĕ. Шăши тесе пукан çинче канлĕн çывăракан Муркăна йăтрăм та тĕпеле шă-ă-аппăн утрăм, алăка майĕпе-е-ен уçрăм. Сĕтел хушшинче какай явакан Вера хăранипе çари çухăрсан хам та чутах кайса ÿкеттĕм. Кушак тапса сикрĕ, алла самаях чĕрсе ячĕ. Хăраса ÿкнĕ анне кухньăна чупса кĕчĕ те çутта çутрĕ. Вера чăх тукмакне тытнă та ним ăнланмасăр пăхса ларать. Пĕрре хĕрелчĕ, тепре шуралчĕ. Пурте ахăлтатсаултăмăр. Лăплансан çур çĕрте апатланма лартăмăр. Верăна начарланмашкăн пĕрре те хĕтĕртмен. Пачах тепĕр май: тăраниччен çитĕр. Унăн кĕлетки маншăн чи илемли. Кăкăрĕ касма вăхăт çитнĕ купăста пек, ури тăн-тăн кăна, пĕççи утнăçемĕн чĕтренсе тăрать. Тулли арăм юратура хĕрÿрех теççĕ те – тĕрĕсех.

Тулли кĕлеткеллĕ Верăна чунран савакан ЧĂКĂТ Ваççи.

РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

Упăшка патне — хăнана

Валерăпа пёрлешме шухăшласан ăçта пурăнасси пирки иккёленмерёмёр. Ăçта пурăннă – çавăнтах. Пёр сăмахпа – кашни хăйён патёнче. Эпё те, вăл та юратăва кулленхи кун йёркипе путарасшăн пулмарăмăр.

Унччен Валера та, эпё те çемьеленсе уйрăлнăччё. Эпё 32 çултаччё. Çак тапхăрччен икё хут кацча кайрăм. Иккёшёнче те – ăнăçсăр. Ачасем çукчё. Çемьепе çыхăннă япăх аса илӳсем вара – мăй таранах. Пёрремёш упăшка кунён-çёрён диван сыхлатчё, пёр вёçём кёвё итлетчё. Наянскерён вёренес те, ёçлес те килместчё. Иккёмёш упăшка, каçарăр та, чăн-чăн сысначчё. Уншăн пёрле выртса тăракан кравать нимён те марччё. Ёçмелли-çимелли йăтса килетчё те телевизор пăхса выртатчё. Батон, печени тёпренчёкёсем йăваланатчёç, кофе-чей тăкăнатчё. Кравате сысна витине çавăрнăшăн мён чухлё тарăхманши? Мён чухлё харкашман-ши? Пӳлёмре шăршлă нуски йăваланни, ăçта кирлё – унта шăлавар выртни, эпё пёçернё тутлă апата çисе тăрансан чунтан какăрни пирки каламастăп та ёнтё.

Пёр хут авланнă Валерăна та кил-тёрёшри харкашу тарăхтарса çитернёччё. Арăмё яланах бигудипе çӳренине, ун умёнчех питне маска сёрнине, урине хырнине каласа кăтартатчё. Валерăна ку пачах килёшмен. Вăл хёрарăм яланах илемлё пулнине хăнăхнă та. Вёсем пёрле виçё çул пурăннă.

Хамăрăн иртнё пурнăçа шута илтёмёр те çемьеленсен расна çёрте пурăнма шухăшларăмăр. Ку хёрӳ юратăва нумайлăха упрама пулăшнине ёнентёмёр. Паллах, тăвансем пирён шухăша ырламарёç. «Мăшăр патне хăнана çӳрени – çемье мар», – терёç вёсем. Анчах ку сăмахсем хăлхана кёмерёç. Чуп-чуп уйăхне /тёрёссипе, эрнине кăна/ Кипрти пилёк çăлтăрлă отельре ирттертёмёр. Унтан таврăнсан кашни хăйён йăвине саланчё. Тунмастăп, Валерăшăн питё тунсăхлаттăм. Ăна кашни кун курас килетчё, анчах экс-упăшка пёр вăтанмасăр какăрнине аса илсен çийёнчех хама чараттăм.

Пётёмпех йёркеллёччё. Пёрпёрин патне романтика çырăвёсем çыраттăмăр, кашни кун вунвун хут шăнкăравлаттăмăр. Пёррехинче Валера курьер урлă ёçе пы-ы-ысăк чечек çыххи пырса пачё.

– Телейлё эсё, Лиза, – ассăн сывларёç ёçтешёмсем. – Пирён упăшкасен çакнашкал парне тăвас шухăш та çук. Эсир вара икё кăвакарчăн тейён.

– Сире уйрăм пурăнма кам чарать? Тытăр та туйăмсене çёнетёр, – тёлёнтём эпё.

– Арçынсемсёр епле ёнтё? Тумлакан крана кам юсё? Ачана математика хăнăхтарăвне шутлама кам пулăшё? Çёр улми кам йăтса килё? Çук, эпир пёрле пурăнма хăнăхнă. Сана пăхса ăмсанмалли çеç юлать, – хаш сывларёç туссем.

Чăннипе, хама хам ăмсанаттăм. Ёç хыççăн хăтлă хваттере кёреттём те канаттăм. Нимён те тарăхтармастчё. Пур япала та хăйён вырăнёнче. Газ плити умёнче ăшталанмалла марччё /каçхине килте пачах çиместём/, чашăк-тирёк çăвас хуйхă çук, урай таса. Ваннăра икё сехет ним мар выртма пултараттăм, туссемпе телефон хёричченех калаçаттăм. Телевизорпа мелодрама пăхма, юратнă кёвве итлеме никам та чармастчё. Эпё япăх арăм тесе никам та мăкăртатмастчё.

Валерăпа тёл пулсан вара... Кирек кам та ăмсанёччё. Упăшкапа эрне кун каçхине тёл пулаттăмăр та канмалли кунсене пёрле ирттереттёмёр. Унтан каллех икё еннелле уйрăлаттăмăр – тунсăхламашкăн, тепёр эрнерен пёрпёрин çине тигр пек сиксе лармашкăн.

Çапла çулталăк çурă иртрё. Çак вăхăтра пачах харкашмарăмăр. Чылай хирёçӳ кил-тёрёшри ыйтăва пула сиксе тухать, пирён вара ун пек марччё. Анчах пёр кётменлёх пурнăçа улăштарчё. Çие юлчё. Мёншён кётменлёх-ха? Эпё амăшё пуласси пирки иккёленме те тытăннăччё. Тем пек тăрăшсан та çие юлмастчё. Тест çинчи икё йёре курсан савăннипе мачча таран сикме хатёрччё.

– Валера, – тӳрех шăнкăравларăм упăшка патне. Савăннăранпăлханнăран сывлăш пӳлёнчё, аран калаçрăм. – Халё сана пёр хыпар пёлтерёп, анчах малтан пукан çине лар, ӳкме пултаратăн.

– Тёл пулмашкăн çёнё сăлтав шăхăшласа кăлартăн-им? – шӳтлерё упăшка.

– Çук. Тата лайăхрах... – пăлханнăран сасă чётренчё. – Эпё кёçех амăшё пулăп, эсё – ашшё.

Пёр сехетрен Валера ман пата персе çитрё. Аллинче – чечек çыххи тата пысăк плюш упа. Упана пирён пулас пепке валли йăтса килнё. Вăл пи-и-итё пысăкчё. Ăна ачапа пёрле кравате вырттарнине куç умне кăларса чылайчченултăмăр. Кăштах лăплансан Валерăран ыйтрăм:

– Итле-ха, малашне мёнле пурăнăпăр?

– Малтанхи пекех! – ним пулман пек хуравларё вăл, мана çамкаран чуп турё. – Мён улшăнать вара?

– Пётёмпех! – ку маншăн кётменлёх пулнăран Валера çумёнчен куçса лартăм. – Эсё, мён, вырсарни кунхи атте пуласшăним? Ача ашшёсёр ӳстёр-им?

– Мёншён ашшёсёр? Унăн ашшё пур, – упăшка каллех мана ыталарё. – Лиза, атя ним çук çёртен драма тăвар мар. Умра – тăхăр уйăх, кун пирки калаçăпăрха. Халё вара каçар, манăн каймалла. Чипер!

Кăштахран хваттер алăкёнчен шаккарёç. Курьер улма-çырла тултарнă карçинкка йăтса килнё. Шалта – кёске çыру: «Пулас амăшё, сана витаминсем кирлё». Анчах ку мана унччен пек савăнтармарё, чуна пырса тивмерё. Апельсинсене ют арçын мар, упăшка илсе килнинчен пахараххи çуккине ăнлантăм.

Çие юлсан йывăр килчё: пёр вёçём ăш пăтранчё. Мёлке пек утса çӳреттём. Пёррехинче тăна çухатрăм. Ун чухне килте пёчченехчё. Валера ман пата пурăнмашкăн куçма шантарчё, анчах сăмахне тытмарё. Тёрёссипе, эпё тăна çухатсан вăл «паттăрла» ёç турё-ха: манпа пёр эрне пурăнчё. Унтан каллех çухалчё:

– Чунăм, каçар, манăн васкавлă проект хатёрлемелле, кансёрлекен ан пултăр. Эпё таврăнăп.

Анчах проект хатёрлесси темшён вăраха тăсăлчё. Малтанхи пекех эрнере 2-3 хут курнăçрăмăр. Тунмастăп: Валера мана хёрарăмсен консультацийё таран леçетчё, УЗИе пёрле пыратчё, чечек çыххи, улма-çырла туянса паратчё. Анчах манăн ăна юнашар курас килетчё. Манăн хваттер оранжерейăна аса илтеретчё: пур çёрте те чечекчё, сивётмёш тутлă апат-çимёçпе йăтăнатчё. Анчах çакă чунăма пёрре те ăшăтмастчё: ёçтешёмсене ăнланма тытăнтăм. Упăшка ăшăтнă кравать çине выртас, тунсăх пуссан унăн тёреклё хулё çине таянас килетчё. Ирхине унпа пёрле вăранма ёмётленеттём. Пёррехинче чăтаймарăм, упăшкана каларăм:

– Валера, пирён хăналăх çемье ытлашши вăраха тăсăлать мар-и? Ку çие юличчен лайăхчё-ха, анчах мана халё çакнашкал çемье тивёçтермест. Хама тăлăх турат пек туятăп.

– Мён сӳпёлтететён? Чёнсенех вёçтерсе çитетёп-çке.

Упăшка мана япăх пулнине чăнах та ăнланмастчё-тёр.

– Манăн кашнинчех чёнес килмест. Сана юнашар пултарас килет. Пёчченлёх йăлăхтарчё.

– Чунăм, эпир кун пирки калаçрăмăр-çке. Кил-тёрёшре чашăк-тирёк шăкăртатсан çемье арканать. Уйрăм пурăнсан лайăхрах. Кăмăлу пăтраннă чухне эпё юнашар пулни пёлтерёшлех-ши? Çакна курмасан аванрах, кун пек чухне эсё маншăн – Кёл пике.

– Кёл пике рольне выляса ывăнтăм. Манăн хёрарăм пулас килет! – сасса хăпартса калаçрăм эпё. Çавăн чухне пёрремёш хут харкашрăмăр.

Настенька çуралсан пурнăç тата йывăрланчё. Упăшка пирёнпе пёрле 1-2 уйăх пурăнсан каллех сăлтав тупса хăйён патне куçрё:

– Ăнлан: кунта ёçлейместёп. Ача пёр вёçём макăрать, эсё вёчёрхенетён. «Ăна илсе кил, кăна илсе кай»... Кашни кун, пин хут çапла. Мана тимлёх, шăплăх кирлё.

– Юрать. Анчах – пёр эрнелёхе çеç, – килёшрём эпё.

Пёр уйăх иртрё – Валера пирён пата çаплипех хăнана çеç çӳрерё. Унăн куçас шухăш пачах çукчё. Упăшка эпё ывăннине кура пёррехинче çапла каларё:

– Няня кирлё. Пулăшё, эсё вара кăштах канăн.

– Ачана ашшё тата амăшё кирлё! Эсё, мён, ашшёне няньăпа улăштарасшăн-им? – кёç-вёç макăрса яраттăм.

– Каллех пуçланчё... Мён тери йăлăхтарчё ку! – тарăхнипе çурăлса кайма хатёр упăшка пальто тăхăнчё.

– Тăхта. Эпё пётёмпех каламарăм-ха, – мён пур вăя пухрăм. – Хăналăх çемье йёркесёрлёх иккенне ăнлантăм. Пурнăç – хитре хуплашкаллă журнал мар. Унăн тӳнтер енё те пур. Мана тата Настенькăна чăннипех те юрататăн тăк ача йёнине те, эпё вёчёрхеннине те чăтаятăн. Юрататăн пулсан...

– Çапла ёнтё: эпех ухмах вырăнёнче юлтăм. Мён тăватăп – пётёмпех япăх! Сана мён пур хёрарăм ăмсанать! Чечексем, парнесем, романтика... Тусусене упăшкисем çапла иртёхтереççё-и? Мён пуррине хакламастăн, чунăма пăчкăпа касатăн.

Алăк шаплатса хупăнчё. Эпир каллех «хăнасем» пулса юлтăмăр. Анчах, унченхипе танлаштарсан, пёр уйрăмлăх çеçчё: малтан упăшка килнё кун уява çаврăнатчё пулсан халё харкашма тытăнтăмăр. Пёрле вырăн ăшăтма та пăрахрăмăр – эпир кӳршёсем кăна тейён. Çук, Валера япăх ашшё пулнă теместёп: ачапа уçăлма тухатчё, шыва кёртетчё, унпа вылятчё. Настьăпа калаçса-выляса тăрансан тухса каятчё. Хёрёмён ӳт температури 40 градуса çитнё чухне вăл юнашар пулмарё. Валера патне шăнкăравларăм, анчах телефона сӳнтернёччё. «Васкавлă медпулăшу» пире больницăна леçнё чухне те вăл юнашар лармарё. Сыватмăшра Настьăна шăнăр туртрё. Унăн сывлăхёшён хăра-хăра, чётречётре ӳлесе макăрнă чухне те Валера алăран тытса лăплантармарё... Çавăн чухне тин ăнлантăм: эпир «хăнасем» мар – эпир пачах мăшăр мар. Хут çинче çеç пёрле, пурнăçра вара – кашни уйрăм. Валера «ашшё сехетне» ирттерме килсен уйрăласси пирки пёлтертём.

– Мёнле калăн – çапла пулать, – пачах кулянмарё вăл. – Сăлтавне пёлтерён-и хăть?

– Мана халат тăхăнсан та, пите маска сёрсен те, маникюр тумасан та юратакан арçын кирлё. Эпё мёнле пур – çавăн пеккине савтăр.

Икё çул иртсен çакнашкал арçынна тёл пултăм. Вăл мана та, Настьăна та йышăнчё. Кулленхи пурнăç йёрки ăна телейлё пулма кансёрлемест. Пултăрин, вăл курьер урлă чечек, шăккалат парнелемест. Парнесене хăй алăран тыттарать. Манпа юнашар çывăрать, пёр сётел хушшинче çиет. Пёр сăмахпа – яланах манпа юнашар. Вăл – чёремён тепёр пайё. Чунăм уншăн çеç тунсăхланă.

Елизавета ЕЛИВАНОВА.
Шупашкар хули.

ПОЭТ ЙЁПЛЕТ

МĂРЧАК Кули

Указаниллё сёнӳ

В.ТуркайУлтарулăхне тишкернё май çуралнă Пултарулăх

Сасă

Мана хăш чух сăнран палласçё.
Хăш чух палласçё сассăмран...
«Туркай-и?» – теççё.
«Çавă», – тетёп
Улталама сăлтав çукран.

«Калатпăр çав: чат эсё! – теççё –
Сассу ытла та паллă сан».
«Паллийё-мёнё», – текелетёп
Эп пит сăпайлă çын пулса.

«Радиопа итлетпёр, – теççё. –
Аван вулатăн сăввуна...»
«Сăвви хăямата та, – теççё, –
Сассу пырса тивет чуна».

...Эх, пурнăç, пурнăç! –
Тёлёнтермёш!..
Пин çын – пин Кăмăл, пин Тёнче.
Пёрин Поэзире – телейё.
Теприн – пачах урăххинче.

Иккен ПУРИН ТЕ пур хăй хакё.
Ман сассăм та ав такама
Чăтма-тӳсме вăй-хал парать-мён,
Вăй-хал парать-мён пурăнма.

...Мана хăш чух сăнран палласçё.
Хăш чух палласçё сассăмран.
«Туркай-и?» – теççё.
«Çавă», – тетёп.
Туннин пёрех усси çукран.

/В.Туркай, «Пурнатпăр-ха...», 14-мёш стр./

* * *

Мана хăш чух сăнран палласçё.
Хăш чух палласçё Куллăмран...
«Мăрчак-и?» – теççё.
«Çавă!» – тетёп, –
Суя сăпайçă пулманран.

«Калатпăр çав, чат Эсё!» –
теççё, –
Перу ытла та Шелсёр сан...»
«Перийё-мёнё», – текелетёп
Ехитствă çитеймест çав ман...

«Компьютерпах вулатпăр, –
теççё –
Эс çырнă «тапкă-çупкăна»,
Сăвву-качку хăямата-ха, –
Туркай епле тӳсет сана?..»

...Эх, Пурнăç, Пăрнăç!
Тёлёнтермёш!..
Пин Çын – пин Кăмăл, пин
Тёнче:
Шуса ӳксен – пырса тапаççё, –
Шеллеç... «Реанимацире».

...Мана хăш чух сăнран палласçё,
Тен, маларах та Туркайран...
«Мăрчак-и?» – теççё.
«Çавă!» – тетёп, –
Чапа ниçта хума çукран...

Унтан

Унтан эп кайăп...
Унтан эп кайăп пётёмпех...
Мана
Хёвел пайăркисем
Сиктерёç утьăкка...
Ун чух манпа каласçё
Турă...

/В.Туркай. «Турă питёнчи куççуль», 186-мёш стр./

Унта

Унтан эп кайăп...
Унпа-кунпа
Унта-кунта та кайăп...
Унтан... унтан та кайăп...
Мён-ма тесессён
Эпё – Кайăк! –
Ан тăвăр айăп...
Унта
Хёвел пайăркисем
мана
«Загар» парнелёç...
Унтан
сиктерёç утьăкка
Сар Пикесем...

Кайран...
пляжра кӳпсе лартсан
Манпа «каласçё» Турă:
«Ара...
Эсех-иç ку,
Халера, –
Мана Килме Ыйтас чухне
«ТУР/Ă/, КАЙ!» – тесе
Хӳтерекенё...» –
Унтан...
Хурайё вăл хушса –
«Тинех çаклантăн,
Богохульник!..»

* * *

Тата тепёр сăвă

Тата тепёр сăвă çырасчё...
Тата тепёр сăвă çырса
Кăштах ман чуна йăпатасчё,
Тата тепёр сăвă çырса.

Тата тепёр сăвă çырмасăр
Епле ман пурнас çёр çинче?
Тата тепёр сăвă çырмасăр
Епле ман пăхас Куссенчен?

Тата тепёр сăвă çырма çеç,
Тата тепёр сăвă çырма
Парсам мана Пурăнăç,
Турă!
Тата тепёр сăвă çырма!..

Тата тепёр сăвă çырсассăн,
Тата тепёр сăвă çырсан
ТАТА ТЕПЁР СĂВĂ çырасчё,
Тата тепёр сăвă çырсан...

/В.Туркай «Турă питёнчи куççуль», 64-мёш стр./

Тата тепёр "штуккă"

Тата тепёр сăвă çырасчё
Çён Пайăм çырма Хал çукран.
Имшер кёнекен калăпне
самăртасчё, –
Тата тепёр çаврăм çырам!
Тата тепёр «Кимăн» çырмасăр
Епле ман тухас суйлава, –
Тата тепёр Ода çырмасăр
Мёнпе ман каяс лавккана?..

Тата тепёр сăвă çырмалăх,
Тен... вёр-çён «хип-хоп»-и унта,
Пёрер чăматан кăшкăру
паллисем
Парсамччё-çке Турă мана?!.

Тата тепёр сăвă çырсассăн,
Е... пёр-пёр такмак-и унта, –
Тата тепёр «штуккă» çырасчё
Поэзи çеç тăтăр тулта!..

* * *

А

а
а-а
а-а-а-а-а-а

акă аранах каларăм: а
акă – а – сасартăк янăранă
вăйсăр сасă

акă – а –
са-ма-на
акă – а –
кунта ырату кăна
кунта ăсату кăна

акă – а – çёнё çын – таса а
акă – а – асап
асап
асап

а
а-а
а-а-а-а-а-а

/В.Туркай. «Шурă фарфор чашăк», 144-мёш стр./

А – диагноз

А...
А-А...
А-А-А-А-А...
Акă аранах каларăм: А.
Ак са-ма-на! –
Кунта Поэзи нема,
Кунта – АНГИНА кăна!..*

* Ангина – пыр шыççи /чир/.

* * *

Сăмах çитмест...
Сăмах çитмест мана –
Чуна уçса чуна лăплантарма.
Эп çак сăвва çыратăп
йăпанмашкăн.
Эп çак сăвва çыратăп
лăпланма.

Сăмах çитмест.
Сăмах çитмест мана.
Сăмах çитмест...
Вёçлетёп сăввăма...

/В.Туркай. «Турă питёнчи куççуль», 181-мёш стр./

Указаниллё сёнӳ

Çитмест тёк Сăмахху –
Неча пера тытмашкăн.
Неча çырмашкăн,
Йăпанмашкăн, –
Хыçкаланса лармашкăн.
Неча чернил тăкмашкăн –
Хута сая ямашкăн.

Çитмест тёк Хăвату –
И неча пуçăнмашкăн,
Çырма пуçличченех Сăвва
И неча вёçлемешкён!..

* * *

Кашнийён – хăйён терчё.
Кама шеллемелле?
Кама ăмсанмалла халь?
Кама ёненмелле?

Патша хăрать – сасартăк
Влаçне çухатасран.
Çёрме пуян – пёр пуссăр,
Е пуçсăр юласран.

Пёри паян ав сывă.
Ыран... /ах, çав «ыран»!/
Ыран чирлёрехи те,
Тен, пулас çук унран.

Тепри ав шăп пёр ёмёр
Пурнать çак çёр çинче.
Анчах пёр ыр сăмах та
Илтеймён ун çинчен.

Чапа тухни шутлать-тёр:
«Ман халăхăм мана
Нихçан та манса каймё».
Ас ту – манмасть сана!..

Кашнийён – хăйён терчё.
Кама ăмсанмалла?
Кама шеллемелле халь?
МЁНЛЕ ПУРĂНМАЛЛА?!

/В.Туркай. «Чунăм манăн, чунăм...», 91-мёш стр./

* * *

Кашнийён – хăйён терчё.
Кама шеллемелле?
Кама йёплемелле халь?..
Кампа ЧАП илмелле?

Хресчен хăрать сасартăк
Ёнесёр юласран.
Поэт тавраш Пуканcăр
Чапа тухаймасран.

Пёри паян ав «Кени».
Ыран... /Ах, çав «ыран»!/
Ыран такмак хуçи те,
Тен, пулас çук унран.

Тепри ав шăп çур ёмёр
Ёнтё çырать Йёплев,
Анчах пёр Ыр Сăмах та
Илтеймё çак Сиплев.

Туркай хăш чух шутлать-тёр:
«Ман Критикём мана
Тек питлес çук, – хăпайрё...» –
Ас ту – хăпать сана!..

Кашнийён – хăйён терчё.
Кама вуламалла?
Кама йёплемелле халь?
Е... кăтăкламалла?!..

ПУЛНИ-ИРТНИ

Упа ашё çинё

– Ёлёк сивётмёш, электричество пулман. Пӳрте çут çанталăк газёпе ăшăтман. Çынсем мёнле пурăннă-ши? – ыйтать Куляран кӳршё ачи.

– Ун чухне вёсем нимён пирки те шухăшламан, – юптарать Куля. – Кунён-çёрён ёçленё, çёр çул ӳсекен йывăçсене йăвантарнă, икё çулти вăкăрсене пёрре çапсах вёлернё. Панă апата ыран валли хăварман. Чёр чун йышлă пулнăран упа ашё кăна çинё, çавăнпа паттăр та çирёп пулнă. Каçсерен çутă çунманран ачасем те йышлă çуралнă.

Тёттём каç

Кёркуннехи тёттём каç. Тӳпере çăлтăрсем çунаççё.

– «Çăлтăр ӳксен çын ёмётленни, мён шухăшлани пурнăçланать», – теççё. Тёрёсех-ши ку? – ыйтать Петёр.

– Тёп-тёрёс. Эпё паян сана ёнерхишён кăштах «ăс кёртесшёнччё». Ав çăлтăр та ӳкрё. Шухăшланине пурнăçламаллах, – тет Куля Петёре кăкăрёнчен чышса.

Шухăш

– Куля, мён пирки шухăшлатăн-ха? – тёпчет кӳрши.

– Ик çёр килограмм ытла таякан Пичке Ваççине вăрмана леçсе ярсан вăрăм тунасем унăн юнне кăна мар, çавне те ёмсен вăл пёр эрнере самаях начарланё, – хуравлать Капсун.

Хăçан мёнле?

– Эпё çӳлти касра пурăнакан Маруça питё хисеплетёп, ытларах юрататăп. Ӳсёр чухне унăн юррисене илтсен манăн ташлас килет. Урăлсан тăнласан йёрес килет, – тет Куля юлташне.

Вёрентет

Каçхине Капсун Куля пӳрт умёнче пирус туртса ларать. Кӳрши ёçрен килет. Хăй питё хуйхăллă.

– Мён пулчё? Çав териех ывăнтăн-им, Павăл? – ыйтать унран Куля.

– Ах, тур-тур! Ывăнни темех мар-ха. Паян мана çӳлти касра пурăнакан Анук пётём тёнче умёнче хăртса пётерчё.

– Мёншён? Мён терё вара вăл? – каллех тёпчет пёрремёшё.

– «Тунката пуç, ухват ура, хăяр сăмса, хуран хырăм. Хăлхуна ашакăнни пек тăратса çӳретён!» – тесе кăшкăрашрё.

– Эх, эсё те çав. Санăн ăна: «Пыйтлă пуç, такана хырăм, турчăка алă, куçусем те сыснанни пек. Шалча ура, сана курсан ачасем кăнтăрлах тарса пытанаççё. Эсё шуйттанпах пурăнатăн пулмалла», – темеллеччё те вăл шăпланатчё, – вёрентет Куля.

Николай УЛЮКОВ.
Шăмăршă районё,
Çёнё Чукал.

АЛ ĂСТИ

Шарф

Çуркунне валли илемлё шарф çыхас килет-и? Часрах лавккана кайса хăвăра килёшекен тёслё çип, йёп туянăр эппин.

Ёç йёрки пёрре те йывăр мар – схемăна çеç пăхăнмалла. Шарфа «Çулçă» эрешпе çыхмалла.

- – накид
- – пиччён куç
- – пиччён 2 куç пёрле сулахаялла тайăнтарса
- – пиччён 3 куç пёрле
- – пиччён 2 куç пёрле
- – хёрринчи куç
- – куç çук



АСРА ТЫТМА

Хёр-хёрарăмшăн усăллă чей

Специалистсем çирёплетнё тăрăх – пăлханни, организма витамин сем çитменни… хёрарăм кăмăлне витём кўрет. Хăмла çырлинчен тата манжеткăран вёретнё чей хитрелёхе упрама, çамрăклăха тăсма пулăшать, хёрарăм сывлăхне лайăх витём кўрет, кăмăла çёклет, токсинсене кăларать, гормон, юнри сахăр шайне йёркелет.

Чей. 1 апат кашăкё вётетнё манжеткăна 1 стакан вёри шыва ярса лартмалла, унтан сăрăхтармалла. Чейе термоса ярсан лайăхрах.

Хăмла çырли çулçинчен. Типётнё хăмла çулçине вётетмелле, 1 чей кашăкё илмелле те 1 стакан шыва ямалла, вёретмелле, 20 минут лартмалла. Чейе пылпа е сахăрпа пăтратнă çырлапа ёçмелле.

Пăшăрханнинчен. Чей валли эмел курăкён чечекё /ромашка аптечная/, катăркас чечекё, сар çип ути кирлё. Вёсене пёр пек шайлашура илмелле. 1 чей кашăкё хутăша 1 стакан вёри шыва ярса 20 минут лартмалла, унтан сăрăхтармалла. Чейе майёпен, пёчёк сыпкăмсемпе ёçмелле.

Хёр ачасем валли. Ку чей невроза сиплет, аппетита лайăхлатать. Вăл шкулта е килте пёр чёлхе тупайман, вёренўре ёлкёрсе пырайман хёр ачасемшён усăллă. Кукша пуçён /одуванчик/ тымарё, мелисса тата вёлтёрен /крапива глухая/ кирлё. Кăштах ăшаланă тымара кофе вётетмелли хатёрпе вакламалла, курăксене те вётетмелле. 1 чей кашăкё хутăша термоса ямалла, 1 стакан вёри шыв хушмалла, 2-3 сехет лартмалла. Кунне темиçе стакан ёçмелле. Ăна çывăрма выртас умён те ăша ямалла. Сиплев курсё – 3 эрнерен кая мар. Анчах ас тăвăр: çак вăхăтра хура чей ёçмелле мар.

ТУТЛĂ ПЁÇЕРЕР-И?

“Ряба чăх” салат

Чăхăн пёçернё какайё, маринадланă кăмпа, симёс хăяр, çăмарта, куккурус, вăррисёр çу çырли кирлё. Салата пăтратмашкăн 1 апат кашăкё майонез, апельсин сётке нё, гранатăн çур чей кашăкё сётке нё, ешёл пахча çимёç, тăвар илмелле.

Çăмартана тăватă пая касмалла. Кăмпана, хăяра, какая турамалла. Салат хатёрлемелли çимёçсене пăтратмалла. Унтан хутăш хатёрлемелле, ăна салата сётел çине лартас умён ярса пăтратмалла.

Сосиска кукăлё

250 миллилитр турăх, 150 грамм çăнăх, 2 çăмарта, 200 грамм сыр, 200 грамм сосиска, 1 чей кашăкё разрыхлитель, тăвар кирлё.

Сыра шултра теркăпа хырмалла, сосискăна çавракан касмалла. Çăмартана, турăха, чей кашăкён 1/3 пайё чухлё апат содине пăтратмалла, разрыхлитель, çăнăх ямалла, чăмаккасем пётиччен лăкамалла. Унтан сыр, сосиска хушмалла, пăтратмалла. Чустана çу сёрнё формăна хумалла, 180 градус таран хёртнё духовкăна 35-40 минутлăха лартмалла.

Ăшне тултарнă çёр улми

400 грамм çёр улми, ўсен-тăран çăвё – 40 миллилитр, çур чей кашăкё мускат мăйăр, 50 грамм услам çу, 100 грамм ветчина, 1 сухан, 60 грамм сыр илмелле.

Çёр улмине хуппинчен тасатмалла, çурмалла касмалла, варрине кăлармалла. Валашка евёр пулнăскере ўсен-тăран çăвё янă çатмара ăшаламалла. Варрине тăварлă шывра пёçермелле, унтан сăрăхтармалла, мускат мăйăр, услам çу ямалла, нимёрлемелле. Сухана теркăпа хырмалла, ветчинана вётетмелле – вёсене ăшаламалла. Унтан ăна нимёрпе пăтратмалла, валашка евёр çёр улмине тултармалла. Сыра çўхен касмалла та çиелтен хумалла. Çёр улмине 170 градус таран хёртнё духовкăна 20-30 минутлăха лартмалла.

ХАЛĂХ МЕЛЁПЕ

Инсультран

Нумаях пулмасть аттен инсульт пулчё. Вăл калаçаймасть, утаймасть. Тухтăрсем атте сываласси пирки иккёленеççё, анчах эпё шанчăка çухатмастăп. Хăшё-пёри инсультран халăх мелёпе сиплен се калаçма та, утма та хăнăхнă тенине илтнёччё. Тархасшăн, витёмлё пёр-пёр мелпе паллаштарăр.

Алиса А.
Çёрпў районё.

Инсультран сипленме çăмăл мар. Чи малтанах чирлё çыннăн ура çине тăрас ёмёт вăйлă пулмалла. Тухтăрсем калани – приговор мар-ха. Шанчăк сўнменни вăй-хăват кўретех. Халăх мелёпе сипленни пулăшма тивёç. Паллах, халăх мелёпе сипленнисёр пуçне ура валли ятарлă хăнăхтарусем тумалла, логопедпа вёренмелле.

Кукша пуç /одуванчик/ инсульта парăнтарма пулăшать. Вăл юнри холестерин шайне чакарать, япаласен ылмашăнăвне йёркелет, нерв тата чёрепе юн тымарён тытăмёсен ёç-хёлне лайăхлатать. Кукша пуçён типётнё çулçине /1 апат кашăкё/ 1 стакан вёри шыва ямалла, 2 сехет лартмалла, сăрăхтармалла. Сиплёскере апатланас умён стаканăн 1/4 пайё чухлё кунне 3 хут ёçмелле. Е кукша пуçён тымарённчен çаврашкасем тумалла. 50 грамм тымара кофе вётетмелли хатёре ярса порошок тумалла, чечек пылёпе 1:1 шайлашура хутăштармалла. Чей кашăкёпе илсе çаврашкасем янтăламалла. Вёсене сивётмёшре упрамалла. Çак çаврашкасене апатланас умён кунне 3 хут çимелле: кукша пуçён настойкине ёçнё хыççăн васкамасăр ёммелле.

ПЁЛЕТЁР-И ЭСИР?

Калча вăхăчё

Пахча çимёç вăррине акма вăхăт çитрё. Ку – яваплă ёç. Тен, хăшё-пёри акнине пысăк вырăна хумасть: акнă тăк шăтатех. Анчах пур чухне те шухăшлани тўрре тухмасть çав. Пăтăрмахсем сиксе тухма пултараççё. Мёнлисем? Тишкерер.

Калча вăрă хуппинчен уйрăлаймасть. Чылайăшё шухăшланă тăрăх – ку начар пахалăхлă вăрă айăпёпе пулать. Калчана йăран çине куçарнă чухне кунашкаллисене пăрахсан лайăхрах. Анчах сăлтавё урăххи те пулаять. Тёслёхрен, вăрра тăпрапа лайăх хупламан е витнё хутаça маларах илнё. Кусем вăрă хуппине типётеççё. Мён тумалла-ха? «Калпака» темиçе кун йёпетмелле: хăех ўкё. Е йёппе асăрханса илмелле. Анчах алăпа хăйпăтмалла мар: калча пётме пултарать.

Калча тикёс шăтмасть. Нумайăшё кун пек чухне пахалăхсăр вăрра е ăна туса кăларакана айăплать, анчах сăлтавё урăххинче те «пытанаять». Тёслёхрен, тикёс мар субстрат. Çапла майпа тарăнрах выртнă вăрăсем вăйсăр ўсеççё е пачах шăтмаççё. Е тăпра тăмлă. Шăварнă хыççăн пулакан хытă сий калчана лайăх аталанма чăрмантарать. Эппин, вăрă акнă чухне çăмăл субстратпа усă курмалла. Тăпрапа вăрă хулăнăш çеç витмелле.

Калча ўкет. Ўкет кăна мар, тымарё патёнчи çўхелет, хуралать. Кун пек чухне калчана «хура ура» /черная ножка/ сиенлетнине палăртмалла. Çак чире фазуриум йышши кăмпасем пуçараççё. Сăлтавё – сивё тăпра /савăт сивё вырăнта ларать/, ытлашши нумай шăварни, калча çăра пулни е субстрат сиенленни /ăна малтан пăспа пăшăхламан/. Мён тумалла? Чир паллине асăрхасанах сиенленнё калчана тăпрапа пёрле тăпăлтармалла, тăпра типиччен шăвармалла мар, тунасем патне хёртнё хăйăр сапмалла. Тăпра типсен марганцовкăпа е «Топсин», «Фундазол» препаратсемпе шăвармалла. Чи лайăххи вара – калчана çёнё вырăна куçарни, малашне асăрхануллăрах пулни.

Куçарсан калча ўсме пăрахать. Эппин, çак ёçе тунă чухне йёркене пăхăнман. Тёслёхрен, калчан тымарё вăрăм пулнă, куçарнă чухне ăна кăштах татман. Йăран çинче вара тымар пёрённё е явăннă. Çакна пула вăл çёрет, калча япăх ўсет. Ку кăна мар, калча пётме те пултарать /сиенленнё тымара кăмпа чирёсем ереççё/. Е калчана куçарнă чухне тăпрана пусарманран тымарё патёнче хушăк юлнă. Çавна май тымар типет, ўсен-тăран начар аталанать. Мён тумалла? Хăшпёр çимёç куçарнине юратмасть. Тёслёхрен, пăрăç, хăяр. Кунашкаллисене торф тултарнă савăта аксан лайăхрах, куçарнă чухне сиенленмёç.

Калча ытла çўле кармашать. Сăлтавё темиçе те пулаять. Пёрремёшёнчен, çутă çитмест е вăрра çăра акнă. Эппин, сайралатмалла е пысăкрах савăта куçармалла. Анчах ас тăвăр: куçарса лартни /тăпрапа пёрле мар тăк/ ўсен-тăран аталанăвне 10-14 кун кая хăварать. Иккёмёшёнчен, тутлăхлă япаласем çитмеççё. Калчана йăран çине лартас умён 3-4 хут «тутлăлантармалла». Тăсăлнă калчашăн «Атлет» препарат паха: е шăвармалла /2-3 çулçă тухнă пулсан/, е çулçисене сирпётмелле – 2-3 хут.

Калчана сăтăрçăсем сиенлетеççё. Ытларах чухне – курăк пыйти /тля/, эрешмен сăвăсё /паутинный клещ/, шурă çунат /белокрылка/. Калчана вёсем юнашар ларакан ўсен-тăранран ерме пултараççё. Е тăпра начар: пахчари пăспа пăшăхламан тăпрапа е лавккари субстратпа усă курнă. Кун пек чухне калчана ытти ўсен-тăран çывăхёнчен куçармалла. Лайăх сăнамалла: сăтăрçăсем пур тăк «Фетоферм» е «Агравертин» препарат пулăшё.

Çулçă çинче тёссёр пăнчăсем курăнаççё. Ку, ахăртнех, хёвелпе пиçни. Чўречe янахё çинче лараканскерсене хёвел пайăрки тўрремён лекнёрен е савăта урама, хёвел питтине хутпа /е урăх япалапа/ хупламасăр кăларнăран пулать. Мён тумалла? Калча савăтне урама вăхăтлăха кăларас тетёр тёк çакна сулхăн çанталăкра тытăнмалла, хёвеле майёпен хăнăхтармалла.

Страницăна Ирина АЛЕКСЕЕВА хатёрленё.

Сканворд



Кулса вилмелле...

Старик дачăра тăрмашать те каçхине çывăрма выртать. Унччен те пулмасть – вăрă-хурах пахчари çёр улмине кăларма тытăнать. Старик полиция шăнкăравлать:

– Часрах килёр-ха! Кунта манăн çёр улмине кăлараççё!

– Каçарăр та, пирён хальлёхе патруль машини çук. Машина пулсанах вёçтерсе çитёпёр, – хуравлаççё ăна.

Ватă çынна çакă тарăхтарсах ярать. Тепёр 5 минутран каллех полиция шăнкăравлать:

– Халё килмесен те пултаратăр: вăрă-хураха персе пăрахрăм.

Виçё минутран полицейскисем сиренăсене çухăртса персе çитеççё. Хыçран ОМОН машини пырса чарăнать. Пурте пахчана хупăрласа илеççё, хăранипе сăмах чёнейми пулнă вăрă-хураха çыхса хураççё. Полковник старик патне пырать:

– Эсё хурахсене персе пăрахрăм терён-çке.

– Эсир те мана машина çук терёр вёт.

* * *

Ватă çын – автобусра. Халăх лăк тулли. Старикăн тепёр чарăнура тухмалла. Хайхискер салонра хёсёне-хёсёне куçать. Ун умёнче сарлака хул пуççиллё, тёреклё арçын тăрать.

– Эсир çитес чарăнура тухатăр-и? – ыйтать ватăскер унран.

– Тухатăп.

Старик кăштах лăпланать. Анчах пăхать – тёреклё арçын умёнче тата çынсем пур. Каллех пăлханса ўкет.

– Калăр-ха, тархасшăн, сирён умри çынсем те тухаççё-и? – ыйтать каллех арçынран.

– Тухаççё.

– Эсир вёсенчен ыйтрăр-им?

– Çук. Хальлёхе вёсем тепёр чарăнура тухассине хăйсем те пёлмеççё-ха.



* * *

Арăмё эрех ёçме юратакан упăшкине ятласа ăнлантарать:

– Алкоголь организмран тёппипех 21 кунран çеç тухать!

– Эппин, манăн нихăçан та тухмасть.

* * *

Авланма хатёрленекен 70 çулти старик сутуça икё костюм суйламашкăн пулăшма ыйтать.

– Мёншён иккё? – ыйтать сутуçă.

– Атте валли.

– Атте валли?! Миçере вара вăл?

– 100 çул тултарчё.

– Туя кам патне каятăр?

– Аттен ашшё авланать.

– Миçере вăл? – тёлёнет хёрарăм.

– 130 çулта.

– Çак çула çитсен те унăн авланас килет-и вара?

– Хăй авланасшăн мар-ха. Ăна ашшё-амăшё çемьелентересшён.

* * *

– Чунăм, эсё кёçех ашшё пулатăн, – тет çепёççён арăмё упăшкине.

– Э-э-э... А-а-а... Ăçтан пёлетён?

Арăмё тарăхса каять:

– Ватиканран шăнкăравласа пёлтерчёç!

* * *

Арçын юлташне каласа кăтартать:

– Ача чухне çапла шухăшлаттăм: «30 çул тултарсан манăн лайăх ёç, пысăк хваттер, юратнă çын пулё». Плана 25 процент пурнăçларăм: ёнер 30 çул тултартăм.

* * *

Ваççа шкултан таврăнать.

– Анне, манăн сана пёлтермелли икё хыпар пур. Пёри лайăххи, тепри – япăххи, – тет амăшне.

– Лайăххинчен пуçла.

– Паян математикăпа «5» илтём.

– Питё аван! Япăх хыпар мёнли?

– Эпё суйрăм.

Иртнё номерти сканворд хуравёсем

СЫЛТĂМАЛЛА: биатлон – сигарет – гарем – Ирина – Ибсен – рада – сётел – Лорак – варени – Ашот – Нагиев – йытă – Венера – йăмăх – кулăр – нитрат – йёлтёр – Панина – Атапай – каччă – курăк – ячё – Ахун – çёлёк – çăхан – игроман.

АЯЛАЛЛА: Америка – лотос – Надина – Сарине – Гагарин – Елена – бобслей – "Брат" – Евтихий – Догилева – Сёве – тёве – Лора – шăмат – Европа – ытти – ăйăр – наян – Рейн – куракан – нимёç – тёлёк – анчăк – ёçкёç – турăх – Айтар – арлан – хăяр – пани.

РЕКЛАМА ТАТА ПЁЛТЕРЎСЕМ

ПРОДАЮ

4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Низкие цены. Рассрочка. Замер, доставка – бесплатно. Т. 89875766562.

5.Блоки керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

20.Пластиковые ОКНА. Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 8-962-598-96-86.

22.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ. Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

23.Гравмассу, песок, бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

24.Грабли, косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

35.Блоки керамзитобетонные вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. **Т. 89373866629.**

42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** – диам. 1,5м; 1м; 0,7м; 0,8м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

66.Заборы кованые. Т. 89276689587.

77.Теплицы: 3х6 – 12000 руб., **3х8** – 15000 руб. Доставка. Т. 48-16-54.

117.ОКНА Чувашии. Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

КУПЛЮ

18.Бычков, тёлок, коров, лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

587.Коров, бычков и лошадей. Т. 8-903-065-99-09.

РАБОТА

110.Монолитчики, плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 89250022238.